24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
ИЮЛЬ
4
ЭРНЕКУН
155 (5870) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ

И. В. СТАЛИН юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмах

1941 çулти июлĕн 3-мĕш

Юлташсем! Граждăнсем! Шăллăмсемпе йăмăнсем! Пирĕн çарпа флотăн боецĕсем!

Сире чĕнсе калатăп эпĕ, манăн тусăмсем!

Гитлерла Германия пирĕн тăван çĕршыв çине вăрçăпа ултавлăн тапăнса нĕни, июнĕн 22-мĕшĕнче пуçланăскер,— малалла пырать. Хĕрлĕ Çар паттăрăн хирĕç тăрать пулин те, тăшманăн чи лайăх дивизийĕсене тата унăн авиацийĕн чи лайăх чăсĕсене ĕнтĕ çапса салатнă тата вĕсем çапăçу хирĕсенче хăйсен вилĕмне тупрĕç пулин те, тăшман, фронта çĕнĕ вăйсем кăларса тăратса, малалла кайса пырать. Гитлер войскисем Литвана, Латвин чылай пысăк пайне, Белоруссин хĕвеланăçĕнчи пайне, Хĕвеланăç Украинăн пĕр пайне тытса илме пултарчĕç. Фашистла авиаци хăйĕн бомбардировщикĕсен ĕçĕсен районне сарса пырать, Мурманск, Орша, Могилев, Смоленск, Киев, Одесса, Севастополь çине пырса бомбăсем пăрахать. Пирĕн тăван çĕршыв умне пысăк хăрушлăх тухса тăчĕ.

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар фашистла войскисен аллине хамăрăн чылай хуласемпе районсене пани мĕнле пулма пултарчĕ-ха? Фашистсен каппайчăк пропагандисчĕсем ывăнма пĕлмесĕр панкană пек, нимĕç фашисчĕсен войскисем чăнах та никам çĕнтерейми войскисем пулса тăраççĕ-ши вара?

Паллах, ун пек мар! Истори çанна кăтартса парать: никам çĕнтерейми çарсем çук тата пулман та. Наполеон çарне никам çĕнтерейми çар тесе шутланă, анчах ăна тĕрлĕ вăхăтра вырăс, Англи, нимĕç войскисем çапса çĕмĕрнĕ. Вильгельмăн нимĕç çарне те империализмлă пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче никам çĕнтерейми çар тесе шутланă, анчах ăна вырăссен тата англо-французсен войскисем темиçе хутчен те поражени кăнĕ, юлашкинчен вара ăна англо-французсен войскисем çапса çĕмĕрнĕ. Гитлерăн хальхи нимĕç-фашистла çарĕ çинчен те çавнах калас пулать, Европа континентĕнче çак çара хирĕç сăйлăн тăни ку тарикччен пулман-ха. Пирĕн территори çинче çеç ăна хирĕç вăйлăн тăни курăнчĕ. Çавăн пек вăйлăн хирĕç тăнине пула, пирĕн Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла çарĕн чи лайăх дивизийĕсене çапса çĕмĕрчĕ пулсан, çакă вара Гитлерăн фашистла çарне те çапса çĕмĕрме май пуррине тата Наполеонпа Вильгельм çарĕсене çапса çĕмĕрнĕ пекех çапса çĕмĕрессине пĕлтерет.

Пирĕн территорин пĕр пайне çапах та нимĕçсен фашистла войскисем тытса илни çинчен калас пулсан, ăна вара пуринчен малтан çакăнпа ăнлантарса памалла: фашистла Германин ССР Союзне хирĕç пыракан вăрçи нимĕç войскисемшĕн лайăх условисенче тата совет войскисемшĕн лайăх мар условисенче пуçланчĕ. Ĕç акă мĕнре: вăрçă вăрçакан çĕршыв пулса тăракан Германин войскисене йăлтах мобилизацилесе ситернĕ пулнă, ССР Союзне хирĕç Германия кăларса тăратнă тата ССРР чиккисем патне илсе пынă 170 дивизи, выступлени тума сигнал парасса çеç кĕтсе, пĕтĕмпех хатĕр тăнă; çав вăхăтрах совет войскисен мобилизацилемелле тата чикĕсем патне пымалла пулнă. Кунта тата çак обстоятельство та пĕчĕкех мар вырăн йышăнса тăрать: фашистла Германия 1939 çулта хăйĕнпе ССРР хушшинче пĕр-пĕрин çине тапăнмалла марри çинчен тунă пакта, хăйне пĕтĕм тĕнче тапăнакан енĕ тесе шутлассине пăхмасăрах, кĕтмен çĕртен тата улттавлă пăсрă. Анланмалла ĕнтĕ, мире юратакан пирĕн çĕршыв, пакта пăсас пуçăрулăха хăйĕн çине илме шутламан пирки, ултав çулĕ çине тăма пултарайман.

Совет Правительстви Гитлерпа Риббентроп пек улттавлă çынсемпе тата ирĕрсемпе пĕр-пĕрин çине тапăнмалла марри çинчен тунă пакт туни мĕнле пулма пултарнă-ха?—тесе ыйтма пултараççĕ. Кунта Совет Правительстви енчен йăнăш пулман-ши? Паллах, çук! Пĕрин çине тапăнмалла марри çинчен тунă пакт вăл инĕ государство хушшинче мир çинчен тунă пакт пулса тăрать. Шăпах çавăн пек пакт сĕнчĕ те ĕнтĕ пире Германия 1939 çулта. Совет Правительстви çавăн пек сĕнĕве йышăнмасăр тăма пултарнă-и-ха? Мире юратакан пĕр государство та хăйпе кӳршĕллĕ державăпа, — çав держава пуçĕнче Гитлерпа Риббентроп пек ирĕсĕрсем тата çынçиенсем тăраççĕ пулин те, — мирлĕ килĕшӳ тăвассинчен пăрăнма пултараймасть, тесе шутлетăп эпĕ. Паллах, çакă вăл чи кирлĕ условси пулсан çеç, мирлĕ килĕшӳ мире юратакан государство территорийĕн тĕрĕс-тĕкеллĕхне, унăн никама пăхăнмасăр пурăнас положенине тата чыслăхне тӳрремĕнех е мĕнле те пулин урăхла пырса тĕкĕнмест пулсан çеç пулма пултарать. Паллă ĕнтĕ, Германипе ССР Союзĕ хушшинче пĕр-пĕрин çине тапăнмалла марри çинчен тунă пакт шăпах çавăн пек пакт пулса тăрать те.

Германипе пĕр-пĕрин çине тапăнмалла марри çинчен пакт туни пире мĕн енчен усăллă пулчĕ-ха? Эпир хамăрăн çĕршыва çулталăк çурă хушши мирлĕ пурнăçпа пурăнма май патăмăр тата, фашистла Германия пакта пăхмасăрах пирĕн çĕршыв çине тапăнма хăйсан, ăна отпор пама хамăрăн вăйсене хатĕрлемешкĕн май илтĕмĕр. Çакă вăл пирĕншĕн чăннипех те усăллă тата фашистла Германишĕн усăсăр пулчĕ.

Фашистла Германия пакта ултавлă майпа пăсни тата ССР Союзĕ çине тапăнни ăна мĕнле усă пачĕ-ха тата хăш енчен усăсăр пулчĕ? Çапла майпа вăл кĕске срок хушшинче хăйĕн войскисемшĕн кăштах усăллă положени турĕ, анчах та вăл, хăй юнлă агрессор пулнине пĕтĕм тĕнче умĕнче тăрăшыв çине кăларса, политика тĕлĕшĕнчен сиен курчĕ. Иккĕленӳ пулма пултараймасть, çак кĕске вăхăтлăха Германия вăрçă тĕлĕшпе тунă ăнăçу эпизод çеç пулса тăрать, ССР Союзĕ политика тĕлĕшпе тунă питех те пысăк ăнăçу вара пысăк вырăнта тăракан тата нумай вăхăтлăха пыракан фактор пулса тăрать; çак фактор никĕсĕ çинче фашистла Германие хирĕç пыракан вăрçăра Хĕрлĕ Çарăн вăрçă ĕçĕсенче татăклă çитĕнӳсем пулса пымалла.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн пĕтĕм паттăр Çар, пирĕн пĕтĕм паттăр Тинĕс-Çар Флочĕ, пирĕн мĕнпур летчиксем-соколсем, пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсем, Европăри, Американăри тата Азири чи лайăх çынсем пурте, юлашкинчен, Германири чи лайăх çынсем пурте Германи фашисчĕсен улталăвлă ĕçĕсене питлеççĕ тата Совет Правительстви çине кăмăллăн пăхаççĕ, Совет Правительствин ĕçĕсене ырлаççĕ тата çакна курса тăраççĕ: пирĕн ĕç— тĕрĕс ĕç, тăшмана çĕмĕрсе тăкатпăр, эпир çĕнтерме тивĕç.

Пире ирĕксĕрех вăрçа хутшăнтарнине пула, пирĕн çĕршыв хăйĕн чи хаяр та ирĕор тăшманне — Германи фашизмне хирĕç питех те хаяр çапăçăва кĕрсе кайрĕ. Танксемпе тата авиаципе питех те вăйлăн хĕçпăшалланнă тăшмана хирĕç пирĕн войскăсем паттăрăн çапăçаççĕ. Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот, нумай йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, Совет çĕршывĕн кашни пуçăм çĕрĕшĕн хăйсене шеллемесĕр çапăçаççĕ. Çапăçăва Хĕрлĕ Çарăн пиншер танксемпе тата самолетсемпе хĕçпăшалланнă тĕп вăйĕсем кĕреççĕ. Хĕрлĕ Çар воинĕсем тĕлĕнмелле паттăрлăхпа хăюллăх кăтартаççĕ. Эпир тăшмана отпор парасси вăйланса тата ӳссе пырать. Хĕрлĕ Çарпа пĕрле Тăван çĕршыва хӳтлемешкĕн пĕтĕм совет халăхĕ çĕкленет.

Пирĕн Тăван çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăха пĕтерме мĕн кирлĕ-ха тата тăшмана çĕмĕрсе тăкма мĕнле мерăсем йышăнмалла-ха?

Чи малтан çакă кирлĕ: пирĕн çынсем, совет çыннисем, пирĕн çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăха пĕтĕмĕшпех ăнланса илмелле, йăваш чунлă пулма, тимсĕрлĕхлĕ пулма, мирлĕ строительство вăхăтĕнчи шухăш-кăмăлсене пăрахас пулать; вăл шухăш-кăмăлсем вăрçăченхи вăхăтра пулма пултарнă, анчах хальхи вăхăтра, положенине вăрçă тĕпренех улăштарнă чухне, вĕсем пысăк сиен кӳме пултараççĕ. Тăшман хаяр та сĕмсĕр. Вăл эпир тар юхтарса ĕçленĕ çĕрсене туртса илес, хамăр вăйпа ĕçлесе тунă тырпула тата нефте туртса илес тĕллеве лартать. Вăл помещиксен власне каялла тавăрас, царизма каялла тавăрас, вырăссен, украинецсен, белоруссен, литовецсен, латышсен, эстонецсен, узбексен, тутарсен, молдавансен, грузинсен, армянсен, азербайджанецсен тата Совет Союзĕнчи ытти ирĕклĕ халăхсен нациллĕ культурипе нациллĕ государственноçне пĕтерсе хурас тĕллеве лартать, вĕсене нимĕçлетес, вĕсене нимĕç князĕсемпе баронĕсен чуриссем туса хурас тĕллеве лартать. Çапла вара, ĕç Совет государствин пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен, ССР Союзĕнчи халăхсен пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен, Совет Союзĕнчи халăхсем ирĕклĕн пурăнасси, е вĕсем чуралăха кĕрсе ӳкесси çинчен пырать. Совет çыннисем çакна ăнланса илни кирлĕ, нимĕн çинчен те шухăшламасăр пурăнма пăрахмалла, вĕсем хăйсене мобилизацилемелле тата хăйсен пĕтĕм ĕçне урăхлатса, вăрçă вăхăтĕнчи пек, çĕнĕ йĕркепе туса пымалла, тăшмана каçару пулмалла мар.

Малалла тата çапла туни кирлĕ: пирĕн хушăра найăкăшакансемпе хăравçăсем валли, паникерсемпе дезертирсем валли вырăн пулмалла мар, пирĕн çынсем кĕрешӳре хăраса тăрасси ан пултăр, фашистла пусмăрçăсене хирĕç, ирĕклĕхшĕн пыракан пирĕн отечественнăй вăрçа вĕсем паттăрăн кайччăр. Пирĕн Государствăна туса хунă аслă Ленин çапла каланă: совет çыннисен чи кирлĕ пахалăхĕ вăл — паттăрлăх, хастарлăх, кĕрешӳре хăрама пĕлманни, пирĕн тăван çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç халăхпа пĕрле çапăçма хатĕр тăни пулать, тенĕ. Большевикăн çак питех те лайăх пахалăхĕ Хĕрлĕ Çарти, пирĕн Хĕрлĕ Флотри милионшар çынсен тата Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен тивĕçлĕхĕ пулса тăни кирлĕ.

Пирĕн хамăрăн пĕтĕм ĕçе халех вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетес пулать, пурне те фронт интересĕсене тата тăшмана çĕмĕрсе тăкас задачăсене пăхăнтармалла. Совет Союзĕнчи халăхсем халĕ ĕнтĕ çакна курса тăраççĕ: Германи фашизмĕ пирĕн Тăван çĕршыва — мĕнпур ĕççыннисене ирĕклĕн ĕçлеме тата ырă пурнăçпа пурăнма условисем туса панă Тăван çĕршыва хирĕç урса кайсах, ирĕррăн кĕрешме чарăнмасть. Совет Союзĕнчи халăхсен хăйсен прависене, хăйсен çĕрне тăшманран хӳтлеме çĕкленес пулать.

Хĕрлĕ Çарăн, Хĕрлĕ Флотăн тата Совет Союзĕнчи мĕнпур граждансен совет çĕрĕн кашни пуçăмне хӳтлемелле, хамăрăн хуласемпе ялсемшĕн юлашки ĕçе тумламĕ юлмиччен çапăçмалла, хамăрăн халăха тивĕçлĕ хăюллăха, пуçаруллăха тата тавçăруллăха кăтартмалла.

Пирĕн Хĕрлĕ Çара пур енчен те пулăшу парас ĕçе организацилемелле, унăн речĕсене çĕнĕ вăйсем вăйлăн парса тăмалла, ăна мĕн кирлине пурне те парса тăмалла, войскăсем тата çара кирлĕ ялаласем тиенĕ транспорта хăвăрт ĕçлеттерессине, аманнисене анлăн пулăшассине организацилемелле.

Эпир Хĕрлĕ Çар тылне тĕрклетме тивĕç, хамăрăн пĕтĕм ĕçе çак ĕçĕн интересĕсене пăхăнтармалла, мĕнпур предприятисене вăйлăн ĕçлеттермелле, винтовкăсем, пулеметсем, орудисем, патронсем, снарядсем, самолетсем нумайрах туса кăлармалла, заводсене, электростанцисене, телефон тата телеграф сыхăнăвне сыхлас ĕçе организацилемелле, сывлăшран килсе тапăннинчен вырăнта сыхланассине йĕркелесе ямалла.

Пирĕн тылри мĕнпур йышши дезорганизаторсене, дезертирсене, паникерсене, суя хыпар саркансене хирĕç пĕр шеллемесĕр кĕрешессине организацилемелле, шпионсене, диверсантсене, тăшман парашютисчĕсене пĕтерсе пымалла, çак пĕтĕм ĕçре хамăрăн истребительнăй батальонсене хăвăрт пулăшса пымалла. Çакна асра тытас пулать: тăшман — ултавлă, чее, улталас тата суя хыпарсем сарас тĕлĕшпе опытлă. Çаксене пурне те шута илмелле тата провокацисем хыççăн каймалла мар. Хăйсен паникерствипе тата хăравçăлăхĕпе оборона ĕçне чăрмантаракансене, вĕсем камне-мĕнне пăхса тăмасăрах, пурне те çийĕнчех Военнăй трибунал судне памалла.

Хĕрлĕ Çар чăсĕсен ирĕксĕрех каялла чакмалла пулсан, чугунçулсем çинчи мĕнпур подвижной состава хамăр паталла илсе килмелле, тăшман аллине пĕр паровоз та, пĕр вагон та хăвармалла мар, противник аллине пĕр килограмм тырă та, пĕр литр горючи те хăвармалла мар. Колхозниксен пĕтĕм выльăхсене хамăр паталла хăваласа килмелле, тырпула тылри районсене турттарса кайма государство органĕсен аллине памалла. Мĕнпур хаклă пурлăха, вăл шутрах тĕслĕ металсене, тырпула тата горючине, вĕсене турттарса тухма май пулмасан, пĕр сăмахсăрах пĕтерсе тăкас пулать.

Тăшман йышăнса илнĕ районсенче партизансен отрячĕсене, юланутлă тата çуран партизансен отрячĕсене тăвас пулать, тăшман çарĕн чăрăшсем çĕсене хирĕç кĕрешме, пур çĕрте те партизанла вăрçă чĕртсе ям, кĕперсене, çулсене сирпĕтсе аркатса тăкма, телефонпа телеграф сыхăнăвне пăсма, вăрмансене, складсене, обозсене çуктарса яма диверсиллĕ группăсем тăвас пулать. Тăшман тытса илнĕ районсенче тăшманшăн тата ăна пулăшакансемшĕн пуриншĕн те тӳсме çук условисем туса хурас пулать, вĕсене кашни утăмрах йĕрлес тата пĕтерсе тăкас пулать, вĕсен мĕнпур мероприятийĕсене аркатса ярас пулать.

Фашистла Германине хирĕç пыракан вăрçа ăланхи пек вăрçă теçе шутламалла мар. Вăл икĕ çар хушшинчи вăрçă çеç мар. Вăл çавăнпа пĕрлех тата нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç пĕтĕм совет халăхĕ туса пыракан аслă вăрçă пулса тăрать. Çак фашистла пусмăрçăсене хирĕç пыракан пĕтĕм халăхăн отечественнăй вăрçин тĕллевĕ—пирĕн çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăха пĕтересси çеç мар, тата Европăри мĕнпур халăхсене, Германи фашизмĕн пусмăрĕнче асапланакан халăхсене, пулăшасси пулса тăрать. Ирĕклĕхшĕн пыракан çак вăрçăра эпир пĕччен пулмăпăр. Çак аслă вăрçăра Европăпа Американăри халăхсем, çав шутрах гитлерла заправилăсем чуралăха кĕртсе ӳкернĕ Германи халăхĕ те, пирĕн шанчăклă союзниксем пулса тăрĕç. Хамăр тăван çĕршыв ирĕклĕхшĕн пыракан пирĕн вăрçă Европăпа Американăри халăхсем хăйсем никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн, демократиллĕ ирĕклĕхсемшĕн туса пыракан кĕрешӳпе пĕрлешсе каять. Çакă вăл Гитлерăн фашистла çарĕсем чуралантаркине хирĕç тата чуралантарас хăрушлăха хирĕç, ирĕклĕхшĕн тăракан халăхсен пĕрлĕхлĕ фрончĕ пулĕ. Çак енчен илсен, Великобритани премьерĕ г. Черчилль Совет Союзне пулăшасси çинчен тухса каланă историллĕ сăмах тата США правительствин пирĕн çĕршыва пулăшу пама хатĕр тăни çинчен калакан декларацийĕ пĕтĕмпех ăнланмалла тата кăтартуллă пулса тăраççĕ, çав выступленипе деклараци Совет Союзĕнчи халăхсен чĕрисенче тавтăвас туйăма çаç вăйлатаççĕ.

Юлташсем! Пирĕн вăйсем çавтери нумай. Мăнкăмăлланса кайнă тăшман ăна часах курса ĕненĕ. Пирĕн çине тапăннă тăшмана хирĕç вăрçма Хĕрлĕ Çарпа пĕрле нумай пиншер рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем çĕкленеççĕ. Пирĕн халăхăн миллионлă массисем çĕкленсе тухĕç. Москвапа Ленинграда ĕççыннисем Хĕрлĕ Çара пулăшма халăхăн нумай пинлĕ ополченине тума тытăнчĕç те ĕнтĕ. Кашни хуларах, ăна тăшман пырса тапăнас хăрушлăх хăратса тăрать пулсан, пирĕн халăхăн çавнашкал ополченине тăвас пулать, Германи фашизмне хирĕç пыракан пирĕн отечественнăй вăрçăра хамăрăн ирĕклĕхе, хамăрăн чыслăха, хамăрăн çĕршыва хамăрăн кăкăрсемпе хӳтлес тесе, мĕнпур ĕççыннисене кĕрешĕве çĕклес пулать.

Пирĕн Тăван Çĕршыв çине улттавлăн тапăннă тăшмана отпор пама ССР Союзĕнчи халăхсен мĕнпур вăйĕсене хăвăрт мобилизацилес шутпа, Оборонăн Государственнăй Комитетне туса йĕркеленĕ, халĕ Государствăра пĕтĕм власть çав Комитет аллинче пĕтĕссе тăрать, Оборонăн Государственнăй Комитечĕ хăйĕн ĕçне тума тытăнчĕ, вăл Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота паттăрăн пулăшма, тăшмана çĕмĕрсе тăкма, çĕнтерӳ тума пĕтĕм халăха Ленин—Сталин партийĕ тавра, Совет Правительстви тавра пĕтĕçме чĕнет.

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Флота пулăшма хамăрăн пĕтĕм вăя хурар!

Тăшмана çĕмĕрсе тăкма халăхăн пĕтĕм вăйĕсене хурар!

Хамăрăн çĕнтерӳшĕн, малалла!

Сталин хушнине большевикла пурнăçлар!

Маслюпромра ĕçлекен рабочисемпе служащисем Совет халăхĕн аслă çулпуçĕ Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланине пĕрле пухăнса итлерĕç. Ĕç пĕтнĕ хыççăн пулнă митингра СССР Верховный Совет депутачĕ Л. С. Спасов юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл рабочисемпе служащисене Сталин юлташ хамăр çĕршыв умне кăларса тăратнă историллĕ задачăсене большевикла пурнăçлама чĕнчĕ.

— Эпир тĕнĕ, — митинг йышăннă резолюцире, — Совет правительстви тата унăн пуçлăхĕ аслă Сталин мĕн сăмахсăр пурнăçа кĕртетпĕр. Эпир ĕç вырăнĕнче тӳрĕ ĕçленипе пĕрлех çар ĕçне вĕренме пулăшатпăр. Сталин юлташ ертсе пынипе Совет халăхĕ фашистсене ним юлмичченех çапса аркатать. Çĕнтерӳ хăвăрт пултăр тесен, хамăрăн пĕтĕм вăя оборона ĕçне шăхăнтармалла.

Сывă пултăр Сталин юлташ!

Хамăра мобилизациленнĕ тесе шутлатпăр

Госбанк работникĕсен митингĕнче йышăннă резолюци

Оборонăн Государственнăй Комитет Председателĕ — хамăрăн Аслă çулпуç Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланине итленĕ хыççăн, Чăваш республикинчи Госбанк конторинче ĕçлекенсен коллективĕ çакăн çинчен шантарса калать: иртĕнсе кайса пирĕн çĕршыв çине вăрçăпа ултавлăн килсе тапăннă фашистсене пирĕн совет халăхĕ, мухтавлă Хĕрлĕ Çар, Тинĕс-Çар Флочĕ тата Совет авиацийĕ тивĕçлĕ тата пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкмалла отпор парĕ.

Ĕççыннисен Аслă çулпуçĕ Сталин юлташ чĕнсе каланине ответлесе эпир, банк сотрудникĕсем, кашниех харпăрхăй вырăнĕнче пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлетпĕр тата хамăра мобилизациленнĕ тесе шутлатпăр. Эпир тăван çĕршывăн, тăшмана çĕнтерме хамăрăн пурнăçа шеллемесĕр ĕçлеме хатĕр, хамăрăн юратнă тăван çĕршыва фашистсен ирсĕр аттисемпе таптама ирĕк ламастпăр. Тăшман халăр тата чее, анчах пирĕн çĕршывăрн ĕççыннисем Ленин—Сталин партийĕ тавра татах та тачăрах пĕтĕçĕç, большевиксен парти ретне, хăйĕн тăван çĕршывне сыхлама отечественнăй вăрçа çĕкленсе тухнă ССР Союзĕнчи ĕççыннисен хурçă пек çирĕп чăмăрне тăшманăн нимĕнле хаярлăхĕ те çĕмĕреймĕ.

Пурне те аслă тăван çĕршыва сыхласа хăварма, фронт валли!

Пурте Осоавиахим ретне, çарпа обороне кружокĕсене кĕрер, çирĕп дисциплинăшăн кĕрешер!

Кашниех çар ĕçне тимлĕн вĕренсе пырар!

Пурте çар ĕçне вĕренмелли кружоксен тата дружинăсен занятийĕсене!

Сывă пулччăр ВКП(б) Центральный Комитечĕ тата Оборонăн Государственнăй Комитечĕ!

Сывă пулччăр Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ, Тинĕс-Çар Флочĕ тата Сталинла авиаци!

Сывă пултăр пирĕн Аслă çулпуç Сталин юлташ!

Хамăрăн çĕнтерӳсемшĕн, малалла!

☆ ★ ☆

Совет Информаци Бюровĕнчен

Каçхи пĕлтерӳ

Июлĕн 2-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Мурманск** тата **Кексгольм** енĕсенче противникăн пехотнăй чăсĕсене хирĕç тата **Двина, Борисов, Слуцк-Бобруйск** тата **Луцк** енĕсенче противникăн подвижной войскисене хирĕç тимлĕн те хаярăн çапăçнă.

Фронтăн ытти енĕсемпе участокĕсенче совет войскисем, государство чикине хăйсен аллинче çирĕппĕн тытса тăрса, чикĕне пăсма хăтланнă противнике хирĕç çапăçнă:

Мурманск енче пирĕн войскăсем противникăн иккĕне яхăн пехотнăй дивизийĕ Средний ятлă çурмаутрав çине тата кăнтăр-хĕвелтухăç енне наступлени туса пынине чарса лартса, ăна хĕçпăшалтан персе тата контрударсем туса пысăк поражени кӳреççĕ.

Куолаярви районĕнче тата **Карельский перешеек**ра пирĕн войскăсем противникăн мĕнпур атакисене ăнăçлăн сире-сире ярăççĕ, ăна пысăк сухатусем кӳреççĕ.

Двина енче кăнтăрла иртнĕ хыççăн пирĕн войскăсем çурçĕр-хĕвелтухăç енне çĕмĕрсе кĕме хăтланакан противнике хирĕç пысăк çапăçусем пуçласа янă. Çапăçусем халĕ те пыраççĕ.

Борисов тата **Слуцк-Бобруйск** енĕсенче пирĕн войскăсем кунĕпех противникăн подвижной часĕсене хирĕç пысăккăн çапăçнă.

Противник малалла кайма хăтланнисене пирĕн войскăсем тимлĕн хирĕç тăнипе тата пирĕн авиацин ăнăçлă ĕçĕсемпе чара-чара лартаççĕ.

Луцк енче **Ровно** районĕнче пирĕн войскăсем çине тăрса тата вăйлăн çапăçаççĕ. Противник кăнтăр-хĕвелтухăç енне тапăнса килме хăтланнисем чарăнман, анчах та унăн хăтланăвĕсене пирĕн войскăсем çирĕппĕн тата тимлĕн хирĕç тăнипе сире-сире ярăççĕ.

Пирĕн авиаци **Луцк** енче противникăн танковăй часĕсене кункаçах чылай хутчен аркатса тăкмаллах пыра-пыра çапнă тата **Бухарест** çине бомбăсем кайса пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе Бухарестри арсенала аркатса тăкнă.

* * *

Çурçĕр флочĕн карапĕсемпе авиацийĕ противник войскисене пыра-пыра çапса, Хĕрлĕ Çар войскисене пулăшса пыраççĕ. Тинĕс-çар авиацийĕ сывлăшри çапăçусенче противникăн 5 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Н. районĕнче противник танкĕсен пысăк группи пирĕн малта тăракан часĕсем витĕр тухса кайса тыла шалалла кĕрсе кайма пултарнă. Тăшмана хирĕç совет танкĕсене янă. Маршра тытăçу пулса иртнĕ. Вăрманти çулпа пынă пирки маневрсем тума май килмен. Хăвăрт тата татăклăн пырса çаппине çеç çĕнтерӳ тума май пулнă. Кĕçĕн лейтенант Меренковăн малта пыракан танкĕ чи малтан пеме пуçланă. Фашистсен виçĕ машинине стройран кăларнă. Çĕмĕрсе тăкнă танксен хӳтлĕхĕсем тураса тăкнă, тепĕр пайне парăнтарса тыткăна илнĕ.

* * *

Фронт сывăхĕнчи полосара Совет патриочĕсем Германи парашютисчĕсене тытса çĕрте Хĕрлĕ Çара паттăрăн пулăшаççĕ. Çĕрле пырса бомбăсем пĕрахнă С. ятлă хулара пурăнакансем диверсанта тытнă, çав диверсант самолетсене вăрçă тĕлĕшĕнчен пысăк вырăнта тăракан объект ăстине ракета ярса кăтартса панă. Колхозниксем кăнтăрла та çĕрле те вышкăсем çинче дежурствăра тăраççĕ, вĕсем сывлăша вичкĕн сăнаса тăраççĕ. Ялти ачасем уçланкăсене сăнама вăрттăн постсем тăваççĕ, мĕншĕн тесен диверсантсене самолетсемпе илсе пырса уçланкăсене антарма пултараççĕ.

* * *

Экстреннăй маршрутпа пыракан паровоз çинче топкăн хыçалти колесникĕсен речĕ йăтăнса аннă. Ана юсама пилĕк сехет кирлĕ пулнă. Н-ски депори рабочи И. С. Сигачев, хăйне шывпа йĕпетсе, хăма тăрăх топкăна кĕнĕ те çунакан кăмрăка аяккалла сирсе, хĕрсе кайнă йывăр колесниксене хăйсен вырăнне лартнă. Тепĕр хĕрĕх минутăран состав палартнă станцине тухса кайнă.

* * *

Сеня К., Житомир хулинчи электростанци начальникĕн ывăлĕ, пионерсемпе пĕрле вăрманта диверсантсене шыраса çӳренĕ. Вăл пĕр паллă мар çынна тĕл пулнă, лешĕ ачаран нефтьбаза тата паровоз деповĕ хăш вырăнтине ыйтса пĕлме тытăннă. Паллă мар çынна депо патне каймалли çула кăтартса пама пулса, Сеня диверсанта постра тăракан милиционер патне илсе пынă.

* * *

Лондонри Гайд-паркра массăллă митинг пулнă, митинг «Совет халăхĕн кĕрешĕвĕ — вăл пирĕн кĕрешӳ. Совет Союзĕпе пĕтĕмĕшпех пĕр шухăшлă пулассишĕн» текен лозунгпа иртнĕ. Митинг участникĕсем хăйсен резолюцийĕнче фашистла агрессорсене питлеççĕ тата «премьер-министр Совет Союзне техникăллă тата экономикăллă пулăшăва пур енчен те парса тăрасси çинчен каланине саламлаççĕ. Совет Союзĕпе Англири халăхсен пĕр пĕтĕмĕшлĕ тĕллев: фашизма пĕтерсе тăкса мирлĕ пурнăçăн çирĕп никĕсне туса хурасси». Англири железнодорожниксем йышăнакан резолюцисенче тата Совет Союзăн Лондонри посольстви ячĕпе яракан çырусенче ССР Союзĕнчи халăхсене чи хĕрӳллĕн саламлаççĕ, вĕсем: «Аслă Совет Союзăн паттăр çарĕ фашистла ордăна тытса чарса, ăна каялла хăваласа ярĕ», тесе çыраççĕ. Исландирен янă çырура унти ĕççыннисем çакна шанса тăраççĕ: Германи фашизмĕ предательле тапăннинчен Хĕрлĕ Çар Совет Союзне хӳтлес çĕрте çитĕнӳсем тăвĕ, ытти çĕршывсенчи демократи вăйĕсемпе пĕрле фашизма — этемлĕх прогресĕпе ирĕклĕхĕн питех те хаяр тăшманне яланлăхах тĕп тăвĕ».

* * *

Европăри пусмăр айне кĕртсе ӳкернĕ çĕршывсенчи нациллĕ-ирĕклĕхлĕ кĕрешĕве тата ĕççыннисем совет çĕршывĕнчи геройла халăх çине ăшă кăмăллă пăхнине фашистсем нименле репрессисемпе те пĕтерсе хураймĕç. Çурçĕр Норвегире фашистсем концентрацийлĕ лагерьсем çĕнĕрен иккĕ тунă, çав лагерьсене ССР Союзĕ çине кăмăлласа пăхакан темиçе пин норвежеца хупса лартнă. Норвегире патриотла листовкăсемпе вăрттăн кăларакан хаçатсене пит йышлăн салатаççĕ, вăл листовкăсемпе хаçатсем Норвеги халăхĕн хаяр тăшманне — немĕç фашисчĕсене хирĕç кĕрешме чĕнеççĕ.

* * *

Нумаях пулмасть Германи пропаганди çакăн çинчен пит пысăк сасăпа пĕлтернĕ: Европăри пур çĕршывсенче те Совет Союзне хирĕç кĕрешме доброволецсен корпусĕсене пухаççĕ пулать. «Доброволецсем» пухас тĕлĕшпе тăвакан çак кампани пит намăслăн арканса пырать, çапла пулассине малтанах кĕтмелле пулнă. Фашистла вербовщиксем шантаж туса тата ирĕксĕрлесе уголовнăй преступниксенчен «доброволецсен» пĕчĕк групписене тума пултарĕç. Сăмахран, Швеципри хаçатсем «Швеципри доброволецсен корпус союзĕн» комиссийĕ пĕлтернине пичетлесе кăларнă, унта «Швецин самостоятельнăй корпусне» пачах тума май çукки çинчен каланă. Çак комисси «доброволецсене» çĕр сынран та сахал пухнă.

Июлĕн 3-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июлĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Борисов** енче тата **Кременец, Збараж, Тарнополь** районĕнче противникăн мотомеханизированнăй часĕсене хирĕç çĕрĕпех хаярăн çапăçнă. Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксен çĕрлехи шыравĕсем тата пысăк мар çапăçусем пулса иртнĕ.

Борисов енче противникăн малти часĕсем **Березина** юханшывĕ урлă каçма пĕр хутчен мар хăтланса пăхнă. Анчах та çавăн пек хăтланнисене пирĕн войскăсем пур çĕрте те арката-арката тăкнă.

Луцк енче пулнă çапăçусем хыççăн,—çав çапăçусене пула пирĕн войскăсем противникăн пысăк мотомеханизированнăй часĕсене **Шепетовка** еннелле куçса пыма чарса лартнă тата вĕсене пысăк сухату кӳнĕ,—противникăн çав группировкин пĕр пайĕ кăнтăралла **Тарнополь** еннелле çĕмĕрсе кĕме хăтланнă. Пирĕн войскăсем çĕркаçах тимлĕн çапăçса, противник войскисен çав группировкине малалла кайма чарса тăнă. Çапăçусем халĕ те пыраççĕ.

Пирĕн авиаци июлĕн 2-мĕшĕнче сывлăшра пулса иртнĕ çапăçусенче противникăнне 61 самолет персе антарнă, хамăрăн 28 самолет пĕтнĕ.

* * *

Паян 6 сехет те 30 минутăра Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин радио тăрăх сăмах тухса каларĕ, вăл хăйĕн сăмахĕнчо Совет Союзĕнчи халăхсене, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне, пирĕн летчик-соколсене фашистла пусмăрçăсене хирĕç пыракан ирĕке тухмалли отечественнăй паттăр вăрçăра тăшмана йăлтах çĕмĕрсе тăкма, çĕнтерӳ тума чĕнчĕ.

Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ чĕнсе калани рабочисене, хресченсене, интеллигенцине калама çук пысăккăн çĕклентерсе ячĕ, нимĕçсен фашистла ордисене—пирĕн Тăван çĕршывăн тата малта пыракан пĕтĕм этемлĕхĕн сĕмсĕр, ултавлă тата хаяр тăшманĕсене çĕнтерес ирĕк-кăмăла халиччен нихăçан пулманла хавхалантарса çĕклерĕ. Çулпуç чĕнсе каланине хуласенче, фабрикăсенче, чугунçулсем çинче, совет учрежденийĕсенче пысăк хастарлăхпа йышăнса илнĕ.

Мускаври «Красная Оборона» фабрикăри рабочисемпе служащисем Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ сăмах тухса каланă ятпа пулса иртнĕ митингра тăван çĕршыва кăкăрпа сыхлама хăйсем пĕтĕмпех хатĕрри çинчен пĕлтернĕ. «Эпир, хĕрарăмсем,—теннĕ Гришакина юлташ,—ĕç фронтĕнче хамăрăн аттесем, упăшкасем, ывăлсем вырăнне тăрса ĕçлĕпĕр, отечествăна фашистла йыткĕтĕвĕсенчен хӳтĕлеме хамăрăн мĕнпур вăя парăпăр. Ултавлă тăшмана çĕнтерессе эпир шансах тăратпăр».

Ĕççыннисен митингĕсемпе пухăвĕсем Ленинграда, Киевра, Харьковра, Дон-çи-Ростовра, Свердловскра тата çĕршыври ытти çĕрпе хуласемпе облаçсенче те пулса иртеççĕ.

Мускавра, Ленинградра, Киевра нумай вунша пин ĕççыннисем Хĕрлĕ Çара пулăшма халăх ополченине доброволецсем пулса çырăнаççĕ.

Совет çыннисен мĕнпур шухăшĕсемпе туйăмĕсене палăртса, Мускаври заводсенчен пĕринче ĕçлекен слесарь Муравьев юлташ митингра çапла каланă: «Аслă Сталин совет халăхне юнлă фашизма хирĕç кĕрешме чĕнет. Çулпуç чĕнсе каланине ответлемен гражданин пирĕн çĕршывра çук тата пулма та пултараймасть. Тăшмана вĕлермеллех çапса аркатма пирĕн пĕтĕм халăх çĕклесе тăчĕ, совет правительстви тавра, тăван большевикла парти тата пирĕн юратнă çулпуç Сталин юлташ тавра никам кисретейми хăватлă вăй пулса пĕрлешрĕ».

* * *

Совет войскисем хамăрăн тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн тата чыслăхĕшĕн калама çук çирĕп тăрса хăюллăн кĕрешеççĕ. Тĕрĕс ĕçшĕн, Совет власĕшĕн, пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхĕн пурнăç интересĕсемшĕн хĕрлĕ воинсем юлашки юн тумламĕ юлмиччен кĕреше çĕç.

Англири, США-ри, Турцири, Швеципри, Японири тата ытти çĕршывсенчи нумайĕш хаçатсем хĕрлĕ воинсен çавтери хăватлă героизмĕ çинчен çапла çыраççĕ: «Хĕвелтухăç фронтĕнче питех те хаяр çапăçусем пулса иртеççĕ. Хĕрлĕ салтаксем çавтери тимлĕн, хăюллăн тата паттăрăн хӳтленеççĕ. Хĕвелтухăçĕнчи çапăçусем иртнĕ çулта Хĕвеланăçĕнче французсемпе англичансене хирĕç пынă çапăçусенчен татах та хаяртараххăн пулса иртеççĕ». «Совет салтакĕн çапăçури пахалăхĕсем çавтери лайăх. Вăл юлашки патрон юлмиччен çине тăрса кĕрешет. Вăл кирек-мĕнле çĕр çинче те траншейăсене е пытанса тăракан постсене хăвăрт тума пĕлет».

Хĕрлĕ Çар боецĕсен хăюллăхĕпе паттăрлăхне фашистла захватчиксене хирĕç пыракан кĕрешӳн малтанхи кунĕсенчех пĕтĕм тĕнче умĕнче демонстрацилесе панă. Хĕрлĕ Çар боецĕсем совет çĕрĕн кашни пусăмне паттăрăн хӳтлеççĕ, совет хулисемпе ялĕсемшĕн геройла çапăçаççĕ, аслă совет халăхне гивĕçлĕ хăюллăха, пуçарулăха тата тавçăрулăха кăтартаççĕ.

* * *

Фашистсен 11 самолечĕ пирĕн аэродром еннелле вĕçсе килнĕ, çав аэродромра старший лейтенант Стариковăн подразделенийĕ вырнаçса тăнă пулнă. Советăн 4 истребителĕ пĕр самантрах сывлăша вĕçсе çĕкленнĕ. Ивановпа Филимонов летчиксен машинисем тăшман самолечĕсен варринех чăмса пынă. Тепĕр темиçе минутăранах нимĕçсен пĕр истребителĕ çĕр çинче çунса кайнă. Ыттисем çапăçма килĕшмесĕр, бомбисене нимĕн йĕркесĕр пăрахса хăварса, каялла вĕçсе тарнă. Бомбăсенчен пĕрин катăкĕ пырса ӳкнипе советăн вĕçме хатĕрлесе лартнă пĕр бомбардировщикĕ çунма пуçланă. Кăшт та пулин тăхтани бомбăсен нагрузки взрыв пуласси патне илсе пыма пултарнă. Пĕрремĕш рангри воентехник Леутин, старший лейтенант Татарчук тата политрук Макеев, хăйсем вилесрен хăрамасăрах пушара çийĕнчех сӳнтернĕ те, самолета взрыв пулас хăрушлăха сирсе янă.

* * *

Противник танкĕсен группи, авиацине артиллери пулăшнипе Н. ятлă юханшыв урлă каçса, пирĕн артиллери дивизионĕ çине атака тума пуçланă. Дивизион командирĕ капитан Синявский тăшмансен танкĕсене тӳрĕ наводкăпа пеме приказ панă. Тĕл персе тивертсе, артиллеристсем 37 танка пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фашистла войскăсем диверсилле ĕçсем тума пирĕн тыла парашютсемпе вак десантсем антарса хăварма тăрăмаççĕ, çав десантсене пирĕн чассемпе истребительнăй батальонсем тăтăшах тыта-тыта пĕтерсе тăкаççĕ. Н. районра наблюдательсем капитан Андреева самолетсем курăнни çинчен пĕлтернĕ. Капитан вĕсем тăшманăн транспорт самолечĕсем пулнине палласа илнĕ. Тепĕр вунă минутăран красноармеецсем участока хупăрласа илнĕ, капитан шухăшĕпе, çав участока Германи парашютисчĕсем анса ларма пултарнă. Офицер ертсе пыракан 80 парашютиста часах тыткăна илнĕ.

* * *

Мускаври Лепсе ячĕпе тăракан заводри рабочисем фашистла йыткĕтĕвĕсене татăклăнах çĕмĕрсе тăкиччен стахановла вахтăна тăнă.

Мускаври предприятисенче нумай профессипе ĕçлессишĕн пыракан движени анлăн сарăлать. Фронта тухса кайнă юлташĕсем вырăнне тăрса ĕçлес тесе, рабочисемпе работницăсем иккĕмĕш специальноçе вĕренсе алла илеççĕ. Москабель заводри вуншар работницăсем хăйсен тĕп ĕçĕнчен уйăрăлмасăрах слесарь ĕçне вĕренеççĕ; рабочисем Соротов, Макаров тата ытти юлташсем те пĕр вăхăтрах токарь тата фрезеровщик пулса ĕçлеççĕ. Маленков ячĕпе тăракан заводри хĕрарăм-служащисем кассерен станоксем çинче ĕçлеме вĕренеççĕ.

Шупашкар хулинчи ĕççыннисен митингĕ

Оборонăн Государственнăй Комитет Председателĕ — ĕççыннисен Аслă çулпуçĕ Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă ятпа, ĕнер Шупашкар хулинчи ĕççыннисен митингĕ пулса иртнĕ.

ВКП(б) Шупашкар хула комитет секретарĕ Андреев юлташ, митинга уçса, СССР Верховный Совечĕн депутатне, ВКП(б) Чăваш обкомĕн секретарьне Чарыков юлташа сăмах парать.

Иртĕнсе кайнă фашизм пирĕн тăван çĕршыв çине вăрçăпа тухса хăйĕн пĕтĕм тискер вăйне Совет Союзĕ çине илсе килни çинчен каласа, Чарыков юлташ Совет Союзĕнчи ĕççыннисем вăрçă вăхăтĕнче тумалли ĕçсем çинче чарăнса тăрать.

— Халăхсен Аслă çулпуçĕ Сталин юлташ Совет Союзĕнчи ĕççыннисене дисциплинăллă, организациллĕ тата сыхăлăхлă пулма чĕнчĕ, — тет Чарыков юлташ.

Чарыков юлташ пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн боецĕсемпе командирĕсем тата Сталинла соколсем тăван çĕршывшăн, фашизма хирĕç паттăрăн кĕрешни çинчен калать. Митинга пухăннисем Хĕрлĕ Çара, Тинĕс-Çар Флотне тата Авиацине саламласа, нумайччен алă çупаççĕ.

Митингра Ленин ячĕпе тăракан артельти стахановка Горелова, интеллигенци ячĕпе Шупашкар поликлиникинчи врач Ефимова, комсомолецсемпе çамрăксен ячĕпе Кондаков юлташсем тухса каларĕç.

Митингра тухса калакансем пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен юратнă тусĕ тата аслă çулпуç Сталин юлташ ятне асăнсанах, пĕтĕм площадь тăваллăн алă çупнипе нумайччен янраса тăрать.

ВЛКСМ Чăваш обкомĕн секретарĕ Пароятников юлташ Оборонăн Государственнăй Комитет Председателĕ — халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ патне саламлă çыру яма сĕнӳ пурри çинчен пĕлтерет.

Пĕтĕм площадь тăваллăн алă çупса, нумайччен шавласа тăрать. Халăх хăйĕн çулпуçне саламлать.

Митинг участникĕсем çавтери пысăк çĕкленӳпе тата нумайччен тăваллăн алă çупса, Оборонăн Государственнăй Комитет Председателĕ — пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен юратнă çулпуçĕ Аслă Сталин патне саламлă çыру яма йышăнчĕç. Шупашкар хулинчи ĕççыннисем, пĕтĕм 200 миллионлă совет халăхĕпе пĕрле, фашистла вăрă-хурахсене çĕмĕрсе тăкса, тăван çĕршыва тĕнчери чи хаяр тăшманран сыхласа хăварма Хĕрлĕ Çара, Тинĕс-Çар Флотне тата Авиацине мĕн кирлине пĕтĕмпех туса пама пулчĕç.

Çавăнпа пĕрлех, вĕсем тăван çĕршывшăн мĕнпур вăя хурса, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр ĕçлеме, организациллĕхпе революциллĕ сыхăлăха темиçе хут ӳстерме, пĕтĕм ĕçе оборона интересĕсене пăхăнтарма пулни çинчен юратнă çулпуçа Сталин юлташа шантарса сăмах пачĕç.

Производствăра лайăх ĕçлеççĕ, çар ĕçне вĕренеççĕ

Шупашкарти ликеро-водочнăй заводри рабочисемпе работницăсем тата служащисем июлĕн 3-мĕшĕнче Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмаха пысăк тимлĕхпе итлерĕç. Заводри кашни рабочипе работницăн пĕр шухăш, пĕр кăмăл—производствăра нихăçанхинчен лайăхрах ĕçлесси, дисциплиннăллă пуласси, çавна май тăван çĕршыва, мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне пулăшасси.

Германин урса кайнă фашисчĕсем Совет çĕршывĕ çине вăрă-хурахла тапăннине хирĕç ответлесе, рабочисемпе работницăсем ĕç тухăçлăхне пысăккăн ӳстереççĕ. Вĕсем хăйсен нормисене 150—200 процент тултарса ĕçлеççĕ. Вĕсем хамăрăн правительство, парти тата халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ тавра тата тачăрах пĕтĕçсе тăнине тепĕр хут кăтартса параççĕ.

— Эпир,—теççĕ рабочисемпе работницăсем,—партипе правительство чĕнсен, алла хĕçпăшал тытса тăшмана хирĕç кĕрешме яланах хатĕр. Юнлă фашистсем пĕлсе тăччăр: пирĕн Хĕрлĕ Çар яланах çĕнтернĕ, хальхи отечественнăй аслă вăрçăра та вăл фашистла тăшмана мĕн юлмиччене çĕмĕрсе тăкĕ. Мĕншĕн тесен пирĕн çирĕп тыл пур, пирĕн çара рабочисемпе хресченсем пулăшаççĕ.

Рабочисемпе работницăсем производствăра ĕç тухăçлăхне ӳстерсе ĕçленипе пĕр вăхăтрах çар ĕçне çине тăрса вĕренеççĕ. ГСО кружокĕнче рабочисемпе работницăсем тата килхуçи хĕрарăмсем вĕренеççĕ. Занятисем кашни кун пулса иртеççĕ. Кунсăр пуçне СССР Совнаркомĕ «Сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланма пурне те обязательнăй ĕçĕркепе вĕрентесси çинчен» постановлени йышăннă хыççăн, заводра самозащита групписене тунă. Группăсене ертсе пыма командирсем уйăрнă. Çав группăсенче занятисем халех пуçланаççĕ.

Г. К.

Пирĕн ответ

Июлĕн 3-мĕшĕнче, ирхине ĕç пуçланиччен, ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совет исполкомĕнче ĕçлекенсем Сталин юлташ радио тăрăх калани сăмаха итленĕ хыççăн митинг туса ирттерчĕç. Митингра горисполком председателĕ Золотников юлташ тухса сăмах каларĕ. Сталин юлташ сăмахне ответлесе мĕнпур вăя мобилизацилеме, фронта пулăшма, партипе правительствăн кăтартăвĕсене пĕр пăрканмасăр пурнăçа кĕртсе пыма, сыхăлăхлă пулма чĕнчĕ Золотников юлташ хăйĕн сăмахĕнче.

— Эпир, — терĕç пĕр саслă пулса йышăннă резолюцире горисполкомра ĕçлекенсем,—Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе пĕтĕм вăя хуратпăр, хамăр вырăнсенче кашниех тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеме пулатпăр.

Июлĕн 4-мĕшĕнчен пуçласа горисполком коллективĕ сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнурат. сыхланма вĕренме тытăнать. Санитари ĕçне вĕренес тĕлĕппе пĕр заняти иртернĕ. Пур работниксем те çак ĕçе тăрăшса вĕренеççĕ.

И. ПЕТРОВ.

Ударлă ĕçлесе тăшмана çапса аркатар

КАНАШ. Предприятисемпе колхозсенче производствăллă çĕкленӳ хăватлăн сарăлса пырать. Кашни рабочи, кашни колхозник тăван çĕршывăн оборона тĕрекне çирĕплетессишĕн, фашистла йытăсене хăвăртрах çапса аркатасшăн кĕрешекен Хĕрлĕ Çара пулăшма тăрăшать.

Вагонсем юсакан заводри кузнечнăй цехри тимĕрçсем—Фомин юлташ нормăна 300 процент, Миронов юлташ 305 процент, Семеновпа Цапин юлташсем 200-шер процент тултарса ĕçлеççĕ. Заводра палламă стахановецсемпе ударниксен йышĕ кулленех ӳссе пырать.

Фашистла Германи пирĕн тăван çĕршыв çине вăрçăпа тапăннине хирĕç колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татнипе ответлеççĕ. «Хĕрлĕ хĕм» колхоз государствăна 147 центнер тырă леçсе панĕ. Аш-какай памалли çултăлăк планне 90 процент тытса тултарнă. «Хĕрлĕ çăлтăр» колхоз та государствăна сĕтĕв парас плана 100 проценчĕпех тултарнă.

И. КОРНИЛОВ.

Ĕç тухăçлăхне ӳстернипе ответлетпĕр

ШАХАСАН. Шуркасси ялсоветĕнчи «VIII съезд Советов» промысла артелĕнче тĕрĕ тĕрлекен тата çĕвĕ çĕлекен цехсем ĕçлеççĕ. ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ «Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен» постановлени йышăннă хыççăн çĕнĕрен, тепĕр цех организацилерĕç. Кунта михсем тумалли пир тĕртеççĕ.

Артель членĕсем ĕç тухăçлăхне ӳстересшĕн çине тăрса кĕрешеççĕ. Çурçул планне 150 процент ытла тултарнă. Кашни цех плана ытлашшипех тултарса пырать. Туса кăларакан продукци пахалăхĕ нумай лайăхланчĕ.

Стахановла ĕçлекенсен йышĕ ӳсет. Çĕвĕ çĕлекен цехри Н. Никитин юлташ нормăна 156 процент, А. Антонов—158, М. Иванова—125, О. Егорова 150 процент тултараççĕ.

Тĕрĕ тĕрлекен цехри М. Гурьева, М. Иванова, А. Егорова тата ытти юлташсем те пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартаççĕ.

Артель коллективĕ СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель Заместителĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Молотов юлташ июнĕн 22-мĕшĕнче радио тăрăх каланă сăмаха итлесен, митинг туса ирттерчĕ.

— Эпир тăрăшса тата тухăçлă ĕçлени,—теннĕ митинг йышăннă резолюцире,—тăван çĕршыв вăй-хăватне тата та ытларах çирĕплетме пулăштăр. Хамăрăн юратнă тăван Хĕрлĕ Çара фашизма хăвăртрах çĕнтерме май патăр.

В. АНТОНОВ.



Хĕрлĕ Çарта. Танксем маршра. Д. Чернов фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Агитаторсем ĕçре

ИЕПРЕÇ. Кĕлĕмкассинчи пуçламĕш парторганизаци çумĕнчи агитколлектив юлашки вăхăтра хăйĕн ĕçне чылаях лайăхлатрĕ. Агитколлективра пурĕ 18 агитатор. Агитколлектив руководителĕ П. Иванов юлташ агитаторсемпе час-часах ханашлусемпе семинарсем туса иртерет. Уйрăм агитаторсене поручениесем парса, вĕсене мĕнле пурнăçлани тĕрĕслесех тăрать.

В. М. Молотов юлташ радио тăрăх халанă сăмах çинчен, СССР Верховный Совет Президиумĕ юлашки вăхăтра кăларнă Указсем çинчен, иртĕнсе кайнă Германи фашизмĕ тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăнса кĕни çинчен тата Совет информаци бюровĕ паракан сводкăсем çинчен колхозниксемпе колхозницăсене, ĕççыннисене агитаторсем тĕплĕн ăнлантарса параççĕ.

Р. Магасев, Г. Сидоров, А. Тихонов, И. Алексеев, И. Васильев, С. Шемякин тата П. Иванов юлташсем уйрăмах питĕ тăрăшса ĕçлеççĕ.

Ăнлантару ĕçне хуçалăхлă задачăсене пурнăçа кĕртессипе, Тăван Çĕршыва тĕреклетес, Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота тата Авиацие пулăшас ыйтусемпе тачă çыхăнтараççĕ.

Ăнлантару ĕçне тĕрĕс организациленине пула ĕççыннисем государство умĕнчи парăмсене срокчен тултарма, колхоз хуçалăхĕнче, вăрман касса хатĕрлес тата çулйĕр строительствинче уларлă ĕçлеме обязательствăсем илнĕ. Илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. 1942 çулăшăн государствăна 161 центнер тырă леçсе пачĕç. Колхоз 16 центнер аш-какай панă. Сĕт-çу, çăмарта обязательствин планĕсене тултарасси те ăнăçлă пырать. Заем укçи 4000 тенкĕ пухнă.

Вăрман касса хатĕрлессинче тата çулйĕр строительствинче колхозниксем ударлă ĕçлеççĕ. Çул çине шашка сарма çителĕклĕ таран йывăç касса хатĕрлерĕç. Халĕ шашка татса сарас ĕç пырать. Çав вăхăтрах колхоз уборкăна хатĕрленессине те манса хăвармасть. Ялхуçалăх машинисене юсас, транспорт инвентарĕсене хатĕрлес ĕç те ăнăçлăн сарăлса пырать.

Çум çумлас ĕçре ватă колхозниксемпе çамрăксем тата шкул ачисем тăрăшса ĕçлеççĕ. Кашни колхозник тата колхозница государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татни, вăрман касса хатĕрлессинче тата çулйĕр строительствинче активлă хутшăнса ĕçлени, колхоза тĕреклетни тăван çĕршыва вăйлатма, пирĕн çĕршыв çине вăрăхурахла тапăнса кĕнĕ Германи фашизмне çапса аркатма пулăшнине лайăх ăнланаççĕ.

Асса кайнă ирсĕр тăшмана пирĕн Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот тата Хĕрлĕ Авиаци çĕнтерессине колхозниксем шансах тăраççĕ.

В. ВИШНЕВСКИЙ.

Çĕнĕлле ĕçлеме тытăннă хыççăн

КАНАШ. Парторгăнсен отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртнĕ хыççăн парти членĕсен тата кандидачĕсен ролĕ тата ответлăлăх ӳсрĕ. Вĕсем XVIII партконференцин решенийĕсене пурнăçласа пырас тĕллĕпе тăрăшса ĕçлеме тытăнчĕç. Цехсенчи сменăсенче политикăллă агитаци вăйланчĕ. Техникăллă конференцисем пулса иртеççĕ. Июнĕн 12-мĕшĕнче депора пулса иртнĕ техникăллă конференцинче çитменлĕхсем çинчен тĕплĕн калаçрĕç, çав çитменлĕхсене пĕтерме кирлĕ мероприятисене палăртрĕç.

Çĕнĕ расписани çине куçни тата Çулйĕр Халăх Комиссарĕн Л. М. Каганович юлташăн 205-мĕш номерлĕ приказĕ парторганизацине хăйĕн ĕçне тĕпренех лайăхлатма ыйтаççĕ. Эпир çак документсене рабочисем хушшинче сарлакан ăнлантарса панă. Июнĕн 9-мĕшĕнчен пуçласа çĕнĕ расписани тăрăх ĕçлеме тытăнтăмăр. Мĕншĕн поездсене расписани-график тăрăх ăсатнă тата йышăннă.

Лунин меточĕпе усă курса, машинистсем пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Вĕсем станци ĕçне лайăхлатма пулăшаççĕ. Иртнĕ çулта депора кашни уйăхра укçа-тенкĕ ытлашши расходланă пулсан, кăçал апрель уйăхĕнче 14 пин тенкĕ, май уйăхĕнче 24.240 тенкĕ пекрекетленĕ.

Коммунистсем тата рабочисем предприятин экономикипе ытларах интереслемне тытăнчĕç. Хальхи вăхăтра депора браксем тăвасси чакрĕ. Коммунист-машинистсем Тимофеев, Клинов, Катрамов юлташсем малтанхи вăхăтченче браксем тунă пулсан, халĕ вĕсем кăтартуллă ĕçлеççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, депора, станцире юлашки вăхăтра браксем пачах пулман.

Ĕçри лайăх енсене кăтартнипе пĕрлех çитменлĕхсене те палăртмалла. Вĕсем Канаш узелĕнче çук мар-ха. Пирĕн агитацилле-массăллă ĕçе кирлĕ вырăна лартас тĕллĕпе нумай ĕçлемелле. Чылай агитаторсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Тепĕр çитменлĕх вăл — депори хăшпĕр машинистсен техникăллă пĕлӳлĕхĕ çителĕксĕрри пулать. Пирĕн задача—вĕсене вĕрентесси, ĕçре пулăшасси. Ку тĕллĕпе эпир хăшпĕр ĕçсене туса иртеретпĕр ĕнтĕ. Узелти пуçламĕш парторганизацисем XVIII партконференцин решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пырассишĕн кĕрешеççĕ.

РЖАВИН.

Канаш станцин узелти партком секретарĕ.

ВКП(б) историне вĕренмелли кружоксен ĕçĕсем

Шупашкар хулинче ВКП(б) историне вĕренмелли кружоксем 4 организацинче ĕçлеççĕ. Халĕ сыхăну управленинчи пуçламĕш парторганизацинчи «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» тăрăх вăтам звенопа вĕренекенсен кружокĕ хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ. Кружокра вĕренме килĕшнĕ юлташсем пурте парти историне учебник тăрăх вĕренсе тухрĕç. Кружока сырăннă юлташсем Ленин—Сталин партийĕн геройла историне пысăк интереспа вĕренчĕç. Кружок заняти уйăхра икĕ хут пулнă. ВКП(б) историне вĕреннĕ вăхăтра наглядăй пособисемпе: ВКП(б) историне кăтартса паракан альбомсемпе, географи карттипе тата диаграммăсемпе анлăн усă курнă.

Кружок ĕçлеме пуçласанах, кружока сӳрекен юлташсем ыйтнипе, кĕнекепе мĕнле ĕçлесси çинчен ятарласа пĕр заняти ирттернĕ. Парти историне вĕренсе пынă май, слушательсен хăйсен политикăллă пĕлӳлĕхне малалла хăпартса пырас интерес ӳсрĕ, марксизм-ленинизмăн классикĕсене çине тăрсах вĕренме тытăнчĕç. Слушательсенчен хăшпĕрисем, сăмахран, М. Васильев, В. Петров тата ытти юлташсем, политикăллă темăсемпе час-часах докладсем тăваççĕ тата агитатор пулса ĕçлеççĕ. Кружокра вĕренекен Журавлева юлташа сыхăну управлени енĕпе районти ертсе пыракан ĕçе лартнă. Алексеев комсомолеца ВЛКСМ комитечĕн секретарĕн заместительне суйланă.

Анчах пур кружоксем те сыхăну управленинчи кружок пек ĕçлемеççĕ-ха. Пĕр заводри парторганизаци çумĕнчи кружок иккĕмĕш çул ĕçлет пулин те, «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» VIII сыпăкĕнчен малах каяйман. Кружокра 11 çын вĕренет. Хăшпĕр коммунистсем, сăмахран, Куликова, Бадаев, Пашаргин т. ыт. те занятисене йĕркеллĕ çӳремеççĕ. Кунти парторганизацин кружок ĕçĕпе ытларах интересленни кирлĕ. Пĕрремĕш номерлĕ типографинчи пуçламĕш парторганизаци çумĕнчи кружок та йĕркеллĕ ĕçлемест. Кружока 1940 çулти декабрь уйăхĕнчех организацинеле. Апла пулин те, кружока сӳрекен слушательсем парти историйĕн пĕрремĕш тапхăрне çеç вĕренеççĕ.

Çакна палăртса хăвармалла: кружоксен ĕçĕнчи тĕп çитменлĕх вăл «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренесси вăрăма тăсăлса пыни пулать. Çак çитменлĕхе пуçламĕш парторганизацисем хăвăртрах тӳрлетме васкамалла. «Кружоксен ĕçне — занятисене ытлашши нумай тапхăра пыракан вăхăта тăсса ямалла мар туса организацилес пулать. Хальхи кружоксен ĕçĕнчи пĕр тĕп çитменлĕхе тăвасран сыхланни кирлĕ, вăл çитменлĕх — пирвайхи темăсем валли виçесĕр нумай вăхăт парса, парти историнче пахаран та паха вырăн йышăнса тăракан Октябрь хыççăнхи тапхăра вĕренмесĕрех хăварни пулать». (ВКП(б) Центральный Комитечĕ «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен» йышăннă постановлениренĕ).

ВКП(б) Центральный Комитечĕ кăтартса панине парторганизацисен мажмалла мар, ăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пымалла.

В. ИГНАТЬЕВ.

Парторганизацисем комсомола пулăшаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Пуçламĕш парторганизацисен отчетпа суйлав пухăвĕсенче коммунистсем партбюро тата пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем комсомол пуçламĕш парторганизацисене çителĕксĕр пулăшнни çинчен критиклерĕç, çак ĕçе тĕпренех лайăхлатма паха сĕнӳсем парса хăварчĕç.

Халĕ пуçламĕш парторганизацисенче коммунистсем отчетпа суйлав пухăвĕсем вăхăтĕнче панă сĕнӳсене пурнăçа кĕртме тытăнĕç.

Райсовет исполкомĕнчи тата райсĕрĕç пайĕнчи комсомол организацийĕсем ку вăхăтчен начар ĕçленĕ. Организацисенчи чылай комсомолецсем пухусене сӳремен, члн укçисене вăхăтра тӳлемен. Райсовет исполкомĕнчи пуçламĕш парторганизаци хăйĕн пухăвĕнче комсомол организацисен секретарĕсен отчечĕсене итлерĕ, комсомола ĕçне лайăхлатма лайăх сĕнӳсем парса решени йышăнчĕ.

Пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Дмитриева юлташ комсомола тĕвĕлипе пулăшать, вĕсен пухăвĕсенче пулать. Халĕ комсомол организацийĕсен ĕçĕнче улшăнусем туни сисĕнет. Комсомолецсем парти историне, çар ĕçне вĕренессине йĕркеленĕ.

Тĕрĕрти территориллĕ пуçламĕш парторганизаци ялсовета кĕрекен колхозсенчи комсомол организацисен отчечĕсене итлесси сӳтсе-явăрă, вĕсене практикăлла пулăшу парать.

Комсомол организацисене кулленех пулăшса пырасси — пуçламĕш парторганизацисен умĕнче тăракан задача

Л. КОНСТАНТИНОВ.

Тырпул вăйлă ӳсет

КУКЕÇ. Колхозсен уйĕсенче тырпулсем вăйлă ӳсни колхозниксен ĕçлес хаваслăхне нумай çĕклет. Халĕ пур çĕрте те çум çумлас тата уборкăна хатĕрленес ĕçсем пыраççĕ. «Осоавиахим» колхоз членĕсем клевер, кĕрхи тулă, выльăх кăшманĕ акнă çĕр лаптăкăшĕсенче тухнă çумкурăксене çумласа тасатнă. Ку тĕлĕшпе Молотов ячĕпе тăракан колхозра та лайăх ĕçлеççĕ. Çуртри çине тухакан çумкурăксене çумласах тăраççĕ. Çитес кунсенчех уборкăра кирлĕ ялхуçалăх машинисене юсаса çитереççĕ. Халĕ 10 сенокосилка, 3 жнейка юсанă.

«Красный флот» колхозра 6 сенокосилка, 2 жнейка юсаса лартнă.

Е. ОЗИКОВ.

Уборкăна хатĕрленсе çитнĕ

ЕЛЧĔК. «Новый путь» колхоз ăнăçлă ӳсекен вăйлă тырпулсене пухса кĕме тĕплĕн хатĕрленсе пырать. Ултă жнейка ремонтланă. Кӳлмелли тавраш-сене 33 комплект хатĕрлесе хунă. Михĕсем 140 штук пур. Уборка вăхăтĕнче столовăй организацилеме 150 пăт çăнăх тата кĕрпесем хатĕрленĕ.

Колхозра 9 агитатор. Вĕсем колхозниксем ĕçленĕ çĕре тухса пирĕн мухтавлă, паттăр Хĕрлĕ Çар Германи фашизмне хирĕç çапăçни çинчен калаçусем ирттереççĕ, хаçат-журнал вуласа параççĕ.

П. ЩЕРБАКОВ.

Тырпулсене пухса кĕме хатĕрленеççĕ

Вăрмар районĕнчи чылай колхозсем тырпулсене пухса кĕме тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Кив Вăрмарти «Большевик» колхоз тимĕрçисем çураки пĕтнĕ хыççăнах уборкăра кирлĕ машинăсене юсама тытăннă. Колхоз правленийĕ çĕнĕрен 500 михĕ туяннă.

Çитмĕшри «Çитмĕш» колхоз пур тĕрлĕ машинăсене те юсаса çитернĕ. Халĕ урапасем юсаççĕ. Итемсене витсе хатĕрлеççĕ.

В. ТУРТУШ.

Колхозри хĕрӳ ĕç

ШАМАРША. «Знамя Октября» колхоз кăçалхи çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа вĕçлерĕ. Тырпулсем халĕ лайăх çитĕнеççĕ.

Çĕртме сухине туса пĕтернĕ. Малтан палăртнă тăрăх, колхозăн кăçал çĕртме пусси çине 2000 лав тислĕк кăлармаллаччĕ. Колхоз, тислĕк пур вырăнсенчен пурне те пухса, уя 4218 лав тислĕк кăларнă. Колхозниксем хăйсен килкартисенчи тислĕксене те уя турттарчĕç.

Тырăсене уйрăм культурăсем тăрăх звеносем çумне çирĕплетсе панă. Колхозниксем халĕ тырăсене çумкурăксенчен тасатас тĕллĕпе хĕрсех ĕçлеççĕ. Кунта, бригадăпа бригада, звенопа звено пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, вăйлă тырпул туса илессишĕн хĕрӳллĕн кĕрешеççĕ.

Агроном В. НИКИФОРОВ.

Колхоз уйхирĕнче

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Колхозсен уйхирĕсенче тырпул лайăх çитĕнет. Колхозниксем вăйлă тырпул туса илме ĕмĕтленеççĕ. Халĕ тырă пуссисене çумкурăксенчен тасатаççĕ. «Коминтерн» колхозра июнĕн 21-мĕш тĕлне клевер акнă вырăнта 52 гектар çинче çум çумларĕç. Çурхи тулă çинче 1,5 гектар ытларах çумкурăксенчен тасатрĕç.

А. НИКИТИН.

Шупашкарти кооптехникум студенкисем хăйсен ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çарăма ыйтса заявлени панă. Халĕ вĕсем медицина сестрисен курсĕнче вĕренеççĕ. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): К. Силигина, А. Ермакова, П. Гринина, А. Зрютина, П. Стипушина.

К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

Выльăх-чĕрлĕхсем валли апат ытларах хатĕрлер

Ялта колхоз стройĕ çĕнтерни выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерме питех те чăлă условисем туса пачĕ. Социализмлă ялхуçалăхĕн юлашки тапхăрĕнче пулнă чаплă çитĕнӳсенчен пĕри вăл — колхозсенче общественнăлă выльăх-чĕрлĕх йышĕ хăвăрттăн малалла ӳссе пыни пулать. Иртнĕ 1939—1940 çулсенче кăна Канаш районĕнче майракаллă шултра выльăхсен шучĕ 1270 пуçран 1535 пуçа çити, сыснасем 1568 пуçран 2574 пуçа, сурăхсемпе качакасен шучĕ 986 пуçран 2260 пуçа çити ӳсрĕ. Çав хушăрах колхозсенчи общественнăлă выльăх-чĕрлĕх фермисен хисепĕ 126 фермăна çити ӳснĕ.

Общественнăлă выльăх-чĕрлĕх йышĕ хăвăрттăн малалла ӳссе пынин результатчĕ—СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозсенче общественнăлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç валли выльăх апатне ӳстермелли мероприятисем çинчен» йышăннă постановлението хăйсен ĕçлĕхĕнче ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынинчен килнĕ.

Колхозсенче общественнăлă выльăх-чĕрлĕхсен шучĕ малалла хăвăрттăн ӳссе пыни — колхозсем умне ытларах та ытларах выльăх апачĕ хатĕрлес ыйтăва çивĕччĕн кăларса тăратать. Анчах, паянхи куна выльăх апачĕн базине тăвасси выльăх-чĕрлĕх йышĕ ӳссе пынинчен чылай юлса пырать-ха. Çапла ĕнтĕ, выльăх-чĕрлĕх йышне малалла ӳстерсе пырас тата вĕсен продуктивлăхне ӳстерес ĕçре чăрмавсем тухса тăраççĕ.

Нумай колхозсенче выльăх-чĕрлĕх апачĕн культурăсен планĕсене çултан çулах тултарса пымаççĕ. Çак çитменлĕхе пĕтересси колхоз руководителĕсен чи тӳрĕ обязанноçĕ пулмалла. Выльăх-чĕрлĕхсем валли апатсем çителĕклĕ хатĕрлес шутпа, ССР Совнаркомĕ «Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç валли выльăх апачĕсене ӳстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановлението тăрăх, выльăх апачĕсене пухмалли плансене тултарас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнмалла.

Иртнĕ çулта Киров ячĕпе тăракан колхоз пĕр гектар çинчен 422 центнер выльăх кăшманĕ туса илчĕ, çапла вара, колхоз выльăхсем валли кирлĕ таранах сĕтеклĕ апат хатĕрленĕ. Куйбышев ячĕпе тăракан тата «Хĕрлĕ Çар» колхозсем те, ытти колхозсемпе танлаштарсан, ытларах сĕт суса илнĕ. Çак колхозсенче кашни сăвакан ĕнерен 1500 литр, уйрăм ĕнесенчен 2 пин литр сĕт суса илнĕ. Çав хушăрах, районри хăшпĕр колхозсем выльăх апачĕн культурине акса тăвассине çаплах хакламаççĕ. Ун пек колхозсенче выльăхсен продуктивлăхĕ палăрмасть.

Партипе правительство вырăнти ответсемпе çĕрĕç работникĕсем тата колхозсем умне большевикла пысăк задачăсем — выльăх апачĕн акса тăвакан пур культурăсен тухăçлăхне те ӳстерме, уйрăмăнах тымар-çимĕç культурисен тата нумай çул хушши ӳсекен культурăсен тухăçлăхне ӳстерес задачăсем лартрĕç. Çакна çĕрĕç работникĕсен, партипе совет организацийĕсем пулăшнипе, ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырас пулать.

Халиччен, пирĕн районри хăшпĕр колхозсенче силоса хакламан пирки, силослăх культурăсем акмалли плана çулсеренех тултарса пыман пулнă. Малашне çакăн пек колхозсем çине ытларах çăвăрăнса пăхмалла, колхозсенче выльăх апачĕ çителĕклĕ таранах пулмалла.

М. ВАСИЛЬЕВА.

Канаш райçĕрĕç пайĕн зоотехникĕ.

Выльăх апачĕ

ШАХАСАН. Калиновкăри колхозăн общественнăлă выльăх-чĕрлĕх шучĕ çулран-çулах ӳссе пырать. Иышланса, хутшăнса пыракан выльăхсем валли апат та ытларах хатĕрлемелле. Çакна шута илсе, колхоз кăçал выльăх-чĕрлĕхсем валли апат ытларах хатĕрлес ĕç çине тимлĕн çаврăнса пăхать.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ «Колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç валли выльăх апатне ӳстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановлението общественнăлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе татах вăйлатма пулăшать. Колхоз кăçал 50 тонна силос хывса хăварма хатĕрленет. Çур гектар çине силослăх хĕвелçавăрăнăш акса хăварнă. Иртнĕ çулсенче хăяр тата çĕрулми аврисене ахаль сая янă, кăçал вĕсене пĕтĕмпех силос тунă çĕрте усă курасçĕ.

Хальхи вăхăтра колхоз çаран утисене пухса кĕртме хатĕрленсе çитнĕ. 90 çава, лапаткасем, кĕреплесемпе сенĕксем çителĕклĕ таран хатĕрлесе хунă.

Колхозра 15,80 гектар çине утăлăх клевер акнă, ăна çумкурăксенчен тасатнă.

С. СТЕПАНОВ.

Ĕçшĕн хушса тӳлемелле тунă хыççăн

ИЕПРЕÇ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановлени колхозниксене ĕçшĕн тӳлес тĕлĕшри уравниловкăна тĕп турĕ, вăл колхозсенче социализмлă çирĕп ĕç принципĕ тăрăх, ĕçшĕн унăн пысăккăшне, унăн пахалăхне кура тӳлемелле туса пачĕ.

Çак историллĕ постановлени тухнăранпа тăватă уйăх кăна çитет пулсан та, колхоз производствинче ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе пысăк улшăнусем пулнине куратпăр. Колхозниксем колхоз производствинче татах та лайăхрах, татах та тухăçлăрах ĕçлеме пуçларĕç. Ăна çак фактсенчен те аванах куратпăр.

Тури Клешкассинчи «Коминтерн» колхоз кăçалхи çуракинче темиçе хутлайăхрах ĕçлерĕ. Социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янипе стахановецсен шучĕ иртнĕ çулхинчен икĕ хут ӳсрĕ. Вĕсем кăçал татах та лайăхрах, тухăçлăрах ĕçлерĕç. Тырă акакансем те, суха сухалакансем те, сӳре сӳрелекенсем те кулленхи нормăна 1,5—2-шер хут ирттерсе тултарчĕç.

Колхозсенче общественнăлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, унăн продуктивлăхне ӳстерес енĕпе те пысăк улшăнусем пур. Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх фермисен тата çав фермăсенчи выльăхсен шучĕ чылаях ӳсрĕ.

Чылай колхозсем 1941 çулти выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарчĕç. «Путиловка» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1941 çулти плана майракаллă шултра выльăхсем енĕпе 113 процент, сурăхсем енĕпе 130 процент, сыснасем енĕпе 134 процент тултарчĕ.

Пысăк Упакасси зооветучастокнĕ кĕрекен колхозсем иртнĕ çулсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе начар ĕçленĕ пулсан, кăçал лайăх ĕçлеме пуçларĕç. Çак зооветучастока кĕрекен колхозсенчи выльăхсен шучĕ 1941 çулти январь уйăхĕнчен пуçласа июнĕн 1-мĕшне çитичченех, урăхла каласан, 5 уйăх хушшинче, майракаллă шултра выльăхсем 33,4 процент, сурăхсем 46,5 процент, сыснасем 73,6 процент хушăннă.

Упакассинчи «Победа» колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç иртнĕ çулсенче начар пулнă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекенсем тăтăшах улшăнса тăнă.

«Путиловка» колхозри М. Гаврилова 14 пăру пăхать, вăл пăхакан пăрусен чĕрĕ виçи кашни кун 670-шер грамм хутшăнса пырать. «Осоавиахим» колхозри ферма заведующийĕ, вăлах доярка М. Романова пăрусене лайăх пăхса ӳстерет. «Канаш» колхозри сурăх пăхакан В. Дмитриева 100 сурăхран 140 путек, «Молния» колхозри В. Максимова 150 путек илнĕ, вĕсене пурне те пăхса ӳстереççĕ.

Кун пек паха çитĕнӳсене татах та нумай илсе кăтартма пулать. Çак çитĕнӳсем вĕсем колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлемелле тунă май, ĕç тухăçлăхĕ хăвăрт ӳссе пынине кăтартса парать.

Д. МИХАЙЛОВ.

Колхоза кĕреççĕ

ШАХАСАН. Агитколлективсем тата вĕсен агитаторĕсем единоличниксем хушшинче тăрăшса ĕçлеменне пула чылай ялсоветсенче единоличник-хуçалăхсене колхоза явăстарас ĕç вăйланчĕ. Çак иртнĕ кунсенче Çĕнĕ Мами ялсоветĕнче 14 хуçалăх колхоза кĕнĕ

А. КИРИЛЛОВ.

Германин фашистла правителĕсем мĕнле майпа пуйса пыраççĕ

Германин хальхи вăхăтри фашистла правителĕсем—бандитсен шайкки пулса тăраççĕ, вĕсене 1933 çулта Германири империалистсен чи реакциллĕ пайĕ влаçа лартнă. Фашистсем влаçа тăнипе хăйсем пуймашкăн усă курараççĕ. Фашистла Германире ĕçлĕ çынсене укçапа çавăрасси, взяточничество пит анлăн сарăлнă. Гитлер—çав бандитла шайккăн пуçлăхĕ—хăйĕн çывăх çыннисем-пуйни çинчен нимĕн именмесĕрех калать: «Вĕсем хăйсем мĕн тăвасса теççĕ—çавна туччăр, анчах çавна тунă чухне ан тытăнччăр кăна». Çак сăмахсене Раушнинг, Данциг сеначĕн председателĕ пулнăскер, хăйĕн кĕнекинче илсе кăтартать.

Раушнинг çапла çырать: «...Çĕнĕ правительсем хушшинче Лей «доктора», «трудовой фронтăн» çав ĕçкĕпе супнă руководительне, кăмăлласа итлетчĕç, вăл пур çĕрте те хăйĕн хăрăлти сассипеле «чеченсене, вĕсем шанса кайиччен татса илĕр» текен куплета юрлатчĕ. Вара кашниех ун хыççăн «усă курăр тата пуйăр» тесе калатчĕç».

Пурте пĕлеççĕ, Гитлер, пысăк ĕçри мар чиновникăн ывăлĕ, влаçа ярса илнĕренпе пуян капиталист пулса тăнă. Вăл фашистла издательствăн хуçинĕ, çав издательство—Германири чи пуян издательство. Гитлер, ССР Союзне хирĕç тата ытти çĕршывсемпе халăхсене хирĕç те вăрă-хурахла вăрçă тума чĕнсе «Мейн кампф» (моя борьба) ятлă ирсĕр кĕнеке сырнă, çавăнтăн вăл чи сахалтан та 3 миллион та 750 доллар илнĕ, çавăнтăнах тата кашни уйăхрах 90 пин доллар илсе тăнă. Çав кĕнекене Германире ирĕксĕрлесех сутнă, çавăнтан килнĕ ĕнтĕ Гитлер пысăк тупăш илни. Анчах, паллах ĕнтĕ, Гитлер çав миллионсене илнипех чарăнса тăмасть. Вăл государствăнне тӳрĕмĕнех илнипе те пуйса пырать. Сăмахран, Геринг, государство укçипе, Гитлера чаплă çурт (замок) туса панă, çав çурт Берхтесгаденра ларать. Гитлер Альпа сăрчĕсем патĕнче, вăрттăн вырăнта, хăйне валли крепость пек çурт туса лартнă, яхта туяннă т. ыт. те.

Гитлерăн укçа-тенкĕ ĕçĕсене Макс Аманн текенскер туса пырать, ăна тем тĕрлĕ майсемпе те хисеплемелле тунă. Çав Аманн—Гитлер издательствин тата реклама агентствисен директорĕ, çав предприятисем пит пысăк доход параççĕ.

Хăй пуяс тĕлĕпе Геринг чи çывăччĕн ĕçлесе пырать. Геринг чаплă пурнăçпа иртĕнсе пурăннине, унăн чаплă хваттерсемпе çуртсем нумайлине Германири фашистсен ушкăнĕсенче пурте пĕлеççĕ. «Геринг хăйĕн нумай хваттерĕсенчен пĕринче ваннăна ылтăнран тунă хулăм плитасемпе витнĕ», тесе сырать Раушнинг.

Герингăн çăткăн аллисем Германири чи пысăк предприятисене те пырса кĕнĕ,—çав предприятисем вăрçă валли ĕçленипе пуйнинчен Геринг та хăйне валли илсе тăрать.

Геринг государствăри нумай должноçсене йышăнса тăрать, çавă ăна миллионшар доход парать. Вăл — Прусси министрĕсен совечĕн председателĕ, генерал-фельдмаршал тата империи авиацийĕн министрĕ, авиацин главнокомандующийĕ (уйрăм должность тата уйрăм шалу), вăл империри государство вăрманĕсен заведующийĕ, Рейхстаг председателĕ, вăрçă хуçалăхĕн уполномоченнăйĕ, империн вăрçă ĕçĕсем тĕлĕпше ĕçлекен министрсен совечĕн председателĕ. Çав должноçсенчен дителĕ Лей çинчен эпир малаларах каларăмăр. Англири «Дейли мейл» хаçат çакăн пек факт çинчен сырса пĕлтерет,—çак фактах тата Германири фашизма хирĕç шухăш-кăмăлсем çинчен те уççăнах калать. Хăйĕн хальхи вырăнне кĕрсе ларсан Лей чи малтанах Баварире, хула тулашĕнче, 100 пин марка тăракан çурт туса лартнă. Çуртне туса та пĕтермен пулнă-ха, çуртăн пĕр алăкĕ çине: «Каласа пар-ха пире Лей, ăçтан илтĕн эсĕ çак çурта тумашкăн тухнă 100 пин маркăна?» тесе сырса çапнă такăшĕ. Лей тарăхса кайнă. Вăл полицие чупса кайнă, мана кӳрентернĕ сынна тупса парсан, çавăншăн пин марка тӳлетĕп, тесе пĕлтернĕ. Тепĕр кунхине вара алăк çине çĕнĕрен: «Каласа пар-ха пире Лей, ăçтан илтĕн эсĕ 101 пин марка?», тесе сырса çапнă хунă.

Германири ĕççыннисемпе пусмăрти халăхсем хаяр çилĕпе сиксе тăрассинчен тата фашистсене сирпĕтсе антарассинчен хăраса, фашистсен пуçлăхĕсем хăйсем çаратса пухнă укçа-тенкĕсен пĕр пайне ютçĕршыв банкĕсене хунă.

Америкăри журналист Никербокер шутласа кăларнă тăрăх, фашистсен пуçлăхĕсем—6 е 7 çын — ютçĕршывсенчи банксене 1,5 миллиард франк яхăн укçа хунă. Ку вăл, паллах ĕнтĕ, вĕсем çаратса пухнă укçан пысăк мар пайĕ кăна-ха.

Германири фашистла правительсен юнăн çунакан шайкки ютçĕршывсене тытса илес вăрçăра Германи халăхне юн ăшне туса, пысăк асапсем тӳтерсе, халăхсене пусмăрласа тата çаратса пуйса пырать.

Ю. ВИНЦЕР.

Греции чуралăхпа выçă пурнăç

ЛОНДОН, июлĕн 2-мĕш. (ТАСС). Америкăри «Нейшенл бродкастинг» радиовещательнăй компанин корреспонденчĕ Анкараран çапла пĕлтерет: пĕлекен çынсем калана тăрăх, Грецире арçынсем, хĕрăмсем тата ачасем пурте выçă аптăраççĕ. Пирейра холер чирĕпе чирленисем пур, вăл чир массăллăн сарăлса каяссинчен шикленеççĕ. Вăрçă ĕçĕсем пулнă пирки Греци территорийĕнче уйăм районсем хупшинче сыхăну çук, вĕсене халĕ те майлаштарса çитермен. Чугунçулсене хытă çĕмĕрсе пĕтернĕ, туртăм вăйĕсен нумай пайĕ пĕтнĕ, горючи те тупма питĕ хĕн. Пысăк хуласене ялхуçалăх продуктисене нимĕн чухлĕ те илсе пымаççĕ. Çав вăхăтрах транспорт çук пирки хăшпĕр вырăнсенче çĕрулмисем тонни-тоннипе çĕрсе пĕтеççĕ. Пĕр Афины хулинче кăна 80 пин çын столовăйсенчи юлашки апатсене çисе пурăнаççĕ. Афины, Патрах, Салоники хулисенче çынсене кунне унччен панинчен 10 хут сахалтарах çăкăр параççĕ. Германи çарĕ Грецирен тухса каяс умĕн, унăн вырăнне Итали çарĕ йышăннă, Германи салтакĕсене нумай укçа панă, вĕсем вара складсемпе магазинсене, чи малтан продовольстви магазинĕсене пĕтĕмпех пушатса хăварнă.

* * *

Яланхи пекех, Германи фашисчĕсем Грецине туртса илнĕ хыççăн Афины хулинче «Грецин» пуканелле правительствине туса хунă. Çак правительствăн пуçлăхĕ пулма Германин «пиллĕкмĕш колоннин» представительне генерал Чолак-оглуна лартнă. Вăл Грецине сутса, эпиро-македон армине нимĕçсене панă. Чолак-оглу присягăна тата тăван çĕршыва улталанăшăн Греци правительстви унăн çар званине каялла илнĕ. Чăннипе илсен, ку çĕршыва Германин оккупацийĕ çарĕ тытса тăрать.

Акă нимĕçсемпе итальянецсем Грецире хуçа пулса тăнине кăтартакан хăшпĕр фактсем.

Крит утравне туртса илнĕ хыççăнах Германи çарĕн командованийĕ утрав çинче пурăнакан мĕнпур хĕрарăмсене тĕрĕслесе тухасси çинчен приказ каларнă. Вăрçа хутшăннă пур хĕрарăмсене те çийĕнчех перспе пăрахмалла, тенĕ Германи çарĕн командованийĕн приказĕнче.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: нимĕç влаçĕсем Афины хули районĕнче рабочисене хытă хĕсĕрлеççĕ. Рабочисене массăллăн арестленĕ. Арестленисенчен нумайĕшне Германи çар склачĕсенче саботаж тунă тесе айăпласа вĕлернĕ. Лами çывăхĕнче ятарласа концентрацилле лагерь тунă.

Германин Акрополь çинче сахăнса тăракан ялавне вăрланă. Çакна май Германи çарĕн командованийĕ приказ каларнă. Афины хулин урамĕсенче 23 сехет хыççăн пулакан çынсене пурне те вырăнтах перспе пăрахаççĕ.

Çынсене кашни кун перспе вĕлернине тата террора пăхмасăрах, Греци халăхĕн ирĕклĕхĕпе вăй-халĕ çĕмĕрĕлмен.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германи влаçĕсем Греци çĕршывĕнче шалти лару-тăру йывăр пулнă пирки лăпкăн пурăнаймаççĕ. Çакна нимĕç влаçĕсем майăн 31-мĕшĕнче каларнă приказ лайăх çирĕплетсе парать. Çак приказра çапла калана: 1. Обществăллă çуртсем çинчен Германи ялавĕсене илнĕшĕн, 2. Германи салтакĕсене ан лектĕр тесе продовольстви пытарнăшăн, 3. Англин тыткăна лекнĕ салтакĕсене кăмăллă пулнăшăн, 4. Греци хаçат-журналĕсем çĕнĕ йĕркесене пăхăнманшăн — пурне те преступлени тунă тесе айăпларççĕ.

Германипе Итали çарĕсем Грецине туртса илнĕ хыççăнах, çĕршывран продовольстви запасĕсене пурне те илсе кайнă. Пĕр ютçĕршыв агентствин Канрти корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Левади хулинче (Афины хулинчен çурçĕр енче 60 километрта) пурăнакан çынсем, Германи влаçĕсем хăратнă пулин те, çак районти халăхран туртса илнĕ продовольствине тиенĕ поезда пушатма тытăннă. Германи полицийĕ халăх çине пеме пуçланă. Темиçе çынна вĕлернĕ тата амантнă. Вилнисен шутĕнче хĕрарăмсемпе ачасем те пур.

Çакăн пек ĕç пулнă хыççăн Германи влаçĕсем поезд патне тата продовольстви склачĕ патне пыракан кашни çыннах перспе вĕлерме хушса приказ каларнă. Афины хулинче чрезвычайлă мерăсем йышăнасси çинчен распоряжени каларнă. Греци çыннисене çĕршерĕн военно-полевой судсене панă.

Германин «Франкфуртер цейтунг» хаçачĕ те Грецири положени çинчен çапла сырса пĕлтерет: пĕтĕм Греци тăрăх ĕçсĕр çынсем пиншерĕн çапкаланса çӳреççĕ. Костыльсем тата туясем çине таянса, çар формине тата больница тумтирĕсене тăхăннă аманнă çынсем Афины хули урамĕсене тултараççĕ. Материаллă пурнăç начар пулнă пирки нумайĕшĕсем кĕлмĕç пурнăçĕпе пурăнаççĕ».

Хорватири террор

Хорватири хаçатсем çакăн пек пĕлтерӳсем чылай пичетлесе кăлараççĕ: Хорвати влаçĕсем Хорвати территоринче пурăнакан сербсене шутсăр хытă пусмăрлаççĕ. «Хорватски лист» хаçат судья-серб Драгутина асаплантарни çинчен сырать. Ана вăл 1936 çултах Хорватин хальхи «пуçлăхне» Павелича вăрă-хурах тесе каланăшăн айăплана. Драгутина 15 çул тĕрмене хупса лартмалла суд тунă. Çак хаçатах, Вараждина хулинчи отельсенчен пĕрин поварне Зеленбабăна, вăл уставшесен отрячĕ çине пенĕ тесе, айăпласа вĕлермелле суд туни çинчен çырса пĕлтерет.

Хорватире ытти национальноçсене те шутсăр хытă хĕсеççĕ. Хаçат сырнă тăрăх, сербсен, еврейсен тата цыгансен хулари транспортпа усă курма та право çук. Хорвати хулисенче трамвайсемпе автобуссем çине çапла сырса хунă: «Сербсене, еврейсене тата цыгансене ларса çӳреме чарнă».

Июнĕн 28-мĕш. (ТАСС).

Францире Совет Союзне кăмăллакан çынсене хĕсĕрлеççĕ

НЬЮ-ИОРК, июнĕн 30-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Франции полици ССР Союзне кăмăллакан çынсене хирĕç хаяр террор пуçласа янă. Каркасонра 19 çула çитнĕ икĕ çамрăка икшер çул хушши тĕрмере хупса усрамалла тата 500-шер франк штраф тӳлеттермелле тунă, мĕншĕн тесен вĕсем Сальсинри чиркӳ тăрне хĕрлĕ флаг çакса хунă. Халăх умĕнче Хĕрлĕ Çара хӳтлесе каласнăшăн тата нимĕç фашисчĕсене критикленĕшĕн пĕр парикмахера тăватă çуллăха тĕрмене хупса лартмалла тата пĕр пин франк штраф тӳлеттермелле тунă. Безьере полици 19—21 çула çитнĕ 5 çамрăка арестленĕ, мĕншĕн тесен вĕсем французсене Совет Союзне пулăшма чĕнекен брошюрăсем сарнă.

М. Ю. Лермонтов вилни 100 çул тултарас умĕн

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Пенза облаçĕнчи Чембарски районри Лермонтово ялĕнче, пĕве хĕрринче, чиркӳ пулнă, халĕ ялти клуб çурчĕпе юнашар склеп тăрать — унта М. Ю. Лермонтов ӳтне пытарнă тупăк ларать.

Е. Халдей фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Фашистла оккупантсем Норвегине выçă тăратса хăварнă

Нумаях пулмасть «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Стокгольмри корреспонденчĕ Норвегире Германин оккупацилле влаçĕсем хуçаланса пурăннипе продовольстви тĕлĕшĕнчи ĕçсем питех те йывăрланса çитни çинчен пĕлтернĕ.

Апат-çимĕç таврашне питĕ пĕчĕк нормăсемпе кăна параççĕ пулсан та, тесе çырать корреспондент, Норвегире юлашки çăнăх, кофе, сахăр, пăрса, фасоль, рис запасĕсемпе ытти продуктсен запасĕсем çывăхри уйăхсенчех пĕтсе çитеççĕ. Халĕ паракан çăкăр нормин те çурма-выçă пурăнма кăна çитет. Çăкăр чăтма çук начар, ăна çинипе питех те нумай çынсем вар-хырăм чирĕсемпе чирлеççĕ. Çăнăха чирлĕ çынсемпе ватă çынсене кăна параççĕ. Норвегири халăха кашни уйăхра 3.000 тонна сахăр кирлĕ. Анчах та февраль уйăхĕнчех çĕршывра пĕтĕм сахăр запасĕ 9 пин тонна кăна пулнă, çавăнтанпа çĕршыва пĕр тонна сахăр та илсе пыман. Осло хулинче какай çукпа пĕрех. Кунта какай лавкисем эрнере пĕр хут е икĕ хут уçăлаççĕ, уçăлнă чух та темиçе сехет кăна ĕçлеççĕ. Çавăн пек кунсенче лавкасем умне ирхине 6 сехетрен пуçласа калама çук пысăк чĕретсем пухăнса тăраççĕ, анчах та унта пĕчĕк татăк какай та сахалăшне кăна лекет. Норвежецсене тăранса пурăнас ĕçре пулă пысăк вырăн йышăнса тăнă, хальхи вăхăтра вăл питех те сайра тĕл пулать. Çăва тата çуллă ытти продуктсене нимĕн тума та çитмен пĕчĕк нормăсемпе параççĕ. Швеции «Социал-демократен» хаçат çине кăтартса парса, корреспондент çапла пĕлтерет: Норвегин çурçĕр пайĕнче 300 пин çынна яхăн выçă ларараççĕ. «Дагенс нюхетер» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нумай хуласенче халăх çăхансемпе чайкăсене çисе пурăнаççĕ. Вăрăлла ĕçсем нумайланнă, уйăрмах продуктсем сутакан магазинсене нумай çаратаççĕ.

Норвегири хуласенче листовкăсем сарăлаççĕ. Çав листовкăсенче çапла кăтартса параççĕ: çĕршыври продовольстви тĕлĕшĕнчи йывăрлăхсем Норвегири продовольствăн мĕнпур запасĕсене Германи оккупанчĕсем туртса илнинчен тухса тăнă.

Халăхăн ахаль те йывăр пурнăçĕ ĕçсĕрлĕхе пула, ĕç укçи чакса пынине кура татах та ытларах йывăрланать.

Июлĕн 1-мĕш. (ТАСС).

Румыни салтакĕсем вăрçăшăн мар

Тыткăна илнĕ салтаксем каласа пани

Пӳлĕме çĕтĕк-çатăх тумтир тăхăннă, сухалĕсем ӳссе кайнă, таса мар салтаксен ушкăнĕ кĕрет. Вĕсен капшин хăйĕн специальноçĕ, хăйĕн биографийĕ. Вĕсем миçе çулта пулнине тата мĕнле профессиллĕ пулнине пăхмасăрах пĕр ĕç çинчен калаççĕ. Вĕсем Румынири фашистла тискер ĕç, законсăрлăх тата Румыни халăхĕ хальхи режима питĕ курайманни çинчен каласа параççĕ. Румынири рабочисем, хресченсем, ĕç интеллигенцийĕ, салтак мундирне тăхăннăскерсем, вăрçăшăн мар, фашистла тискер-кайăксемшĕн хăйсен юнне тăкашăн мар.

Сĕтел умĕнче салтак Тома Х. Вăл 25 çулта. Вăл хăйĕн пурнăçĕнчи пилĕк пайне çарта пулса ирттернĕ. «Аслă Румынири» салтаксен «чаплă» пурнăçĕ унăн питех те паллă. Выçлăха тата нушана, правасăрлăха тата мăшкăласăк хыткан, асапланнă салтак пурне те ытлашшипех курса тӳснĕ.

— Румыни çарĕнче служить тунă вăхăтра тутă пулнине эпĕ астумастăп, — тесе калать Х. — Халĕ кăна, вăрçă пуçланнă май, Румыни çарĕнче салтаксене «лайăх апат пама» тытăннă. Салтаксем талăкне 500—600 грамм туртакан пĕр çăкăр илеççĕ. Кăнтăрлахи апата çусăр, какайсăр пĕçернĕ пăрса е çĕрулми яшки параççĕ. Иккĕмĕш блюда çук. Аш-какай эрнере пĕрре кăна параççĕ, анчах та шутсăр сахал панă пирки, салтаксем хăш кун «аш-какай кунĕ» пулнине аран-аран пĕлеççĕ. Каçхи апат каллех пăрса е çĕрулми яшки. Салтаксене кунне икĕ лей — пĕр спичка коробки хакĕнчен икĕ хут йӳнĕ кăна параççĕ! Çакна та пулин фашистла мерзавецсем хăйсем çумне илсе юлаççĕ. Сăмахран, эпĕ виçĕ уйăх ытла пĕр лей та илсе курман.

— Румынире туртса илсе, — тесе калать Х., — Германия ăна вĕçне çитиченех çаратрĕ. Хресченсен мĕнпур тырпулне туртса илнĕ. Нумай пулмасть, манăн тăвансем, вĕсен юлашки кукурузне туртса илни çинчен çырса пĕлтернĕç.

Гитлерла правительсем пуçласа янă вăрçăпа килĕшменни, пуянсемшĕн, авантюристсемшĕн тата фашистла бандитсен интересĕсемшĕн хăйсен юнне тăкасшăн марри çинчен салтак Василий Р. та каласа парать.

— Салтаксене тĕрĕсти çинчен каламарĕç, — тет вăл. — Гитлер приказĕ тăрăх пире Совет Союзне хирĕç вăрçа хăваласа янă чухне те пире питĕ хытă улталарĕç. Пире, 40 çынна пуçтарчĕç те, батальон командирĕ каларĕ: Совет Союзĕ Бессарабине Румынине каялла парать, Хĕрлĕ Çар кивĕ чикĕ патне каллех чакма тытăнчĕ. «Пире, тесе каларĕ батальон командирĕ, — Прут юханшыв урлă каçса Хĕрлĕ Çар кайнине тĕрĕслеме тата пурлăха çаратса пĕтересрен сыхлас ĕçе организацилеме приказ панĕç. Эпир нимĕн шухăшламасăрах лодкăсем çине ларса Прут юханшывĕ урлă каçма тытăнтăмăр. Пире командовать тăвакан лейтенант çыранăн тепĕр енне юлчĕ. Эпир совет çыранĕ хĕрнелле сывхарсан пирĕн çине çавтери вăйлăн пеме тытăнчĕç. Эпир каялла тарма хăтлантăмăр, анчах та красноармеецсем хупăрласа илнине курсан, тыткăна лекрĕмĕр.

Румыни летчикĕ Б. çапла каласа панă:

— Пире совет аэродромĕсем çине бомбăсем пăрахма вĕçме хушрĕç. Анчах та çакна пурнăçа кĕртме май килмерĕ, мĕншĕн тесен сывлăшри малтанхи çапăçурах совет истребителĕсем пире хăваласа ячĕç, пирĕн икĕ машина, çав шутрах манăн та, çĕре перспе анчĕç.

— Совет летчикĕсем çинчен çакна кăна калама пултаратăп, — тет Б. — Вĕсем пурте малтанхи çапăçура эпир тĕлпулнисем пек пулсан, вĕсене хирĕç сывлăша вĕссе хăпараканни телейсĕр çын!

Действующи арми, июлĕн 2-мĕш.

(ТАСС спецкорĕ).

Норвегири лару-тăру

НЬЮ-ИОРК, июнĕн 29-мĕш. (ТАСС). Паллă журналист Иэстен, Европăри темиçе хаçатăн Скандинавири корреспонденчĕ пулнăскер, Америкăри «Форейн афферс» журналра статья пичетлесе каларнă. Çав статьяра вăл акă мĕн калать: Германия оккупациленĕ хыççăн Норвеги халăхĕ чăннипе илсен чуралăха кĕрсе ӳкнĕ. Конституциллĕ гарантисене йăлтах пĕтернĕ, законлă йĕркене уйăрса лартнă судьясене пурне те ĕçрен кăларнă, рабочисене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çӳреме чарнă, вĕсем крепостной çынсем пулса тăнă. Çĕршывра фашист Квислингăн хаяр террорĕ пуçпулса тăрать.

«Норвегири пиншер патриотсем, — тесе çырать автор,—тĕрмесенче, концентрацилле лагерьсенче ларараççĕ, вĕсенчен нумайĕшне асаплантарса е перспе вĕлернĕ. Хальхи вăхăтра пĕр Осло кăна политикăллă ĕçшĕн айăпланакансем валли концентрацилле виçĕ лагерь тунă. Вĕсем хушшинче «Молерга-тен 19» лагерьти режим уйăрмах хаяр, унта тискер террор сарса янă.

Çапла пулсан та, тет Иэстен, Норвеги халăхĕ кĕрешме пăрахмасть. Поражени тӳсни тата хальхи вăхăтра асаплании норвежецсен оккупантсене хирĕç кĕрешес кăмăлне çĕмĕреймест.

Германи фашисчĕсен Аргентинăри ĕçĕсене тĕрĕслени

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 2-мĕш. (ТАСС). «Чикаго дейли ньюс» хаçатăн корреспонденчĕ Буэнос-Айресран çапла пĕлтерет: нацистла шпионсем, саботажниксем тата фашистла майлă этемсем фашистсем Аргентина интересĕсене хирĕç тăвакан ĕçсене парламент тĕрĕслеме тытăннине аркатса яма хăтланаççĕ. Фашистсен Аргентинăна хирĕçле ĕçне тĕрĕслекен парламент комитечĕ çырусем нумай илет, çав çырусенче комитет членĕсене хăратса çыраççĕ. Комитет ларăвĕнче Германин Трансоцеан агентствин руководителĕ çапла йышăннă: Германии Аргентинăри промышленникĕсем агентство отделенийĕсене укçа-тенкĕ парса пулăшаççĕ. Трансоцеан агентстви Аргентинăрта 60 çын тытса тăрать.

Малашнехи çитĕнӳсемшĕн

КАНАШ. «Красный воин» артель ултă уйăхри плана июлĕн 1-мĕшне 158 процент тултарчĕ. Калас пулать, плана пур енĕпе те пурнăçланă. Планран ирттерсе 205 пин тенкĕлĕх продукци кăларнă.

Артель членĕсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Артель членĕсем юлашки вăхăтра нихăçанхинчен те пысăк активлăх кăтартаççĕ. Вĕсем тăшман бандине пĕр шеллемесĕр çĕмĕрес, хăйсен пысăк тухăçлă ĕçĕпе паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшас кăмăлпа ĕçлеççĕ.

Артель ĕç тухăçлăхне 22 процент ӳстернĕ, продукцин хăйне ларакан хакне 6,2 процент чакарнă. Артель членĕсем малашнехи çитĕнӳсемшĕн çине тăрса кĕрешеççĕ.

И. КОРНИЛОВ.

Массăллă оборона ĕçĕ пединститутра

Чăвашсен государство пединститутĕнчи партипе комсомол тата Осоавиахим организацийĕсем массăллă оборона ĕçне лайăх ертсе пыраççĕ. Фашистла Германия пирĕн мирлĕ Совет Союзĕ çине вăрçăпа тапăннă хыççăн институтра массăллă оборона ĕçĕ нихăçанхинчен ытларах вăйланса карĕ. Студенткăсем, институтра тĕрлĕ ĕçре ĕçлекен хĕрарăмсем — медсестрасемпе санитаркăсем пулма, студентсем — пулеметчиксем пулма тăрăшаççĕ.

Çакна шута илсе пединститутра медсестра ĕçне вĕренмелли, пулеметран пеме вĕренмелли, санитаркăсем хатĕрлекен кружоксем ĕçлеме пуçларĕç. Хальре медсестрасен кружокĕнчен 15 хĕрарăм вĕренсе тухрĕç тата 13 хĕрарăм вĕренеççĕ. Санитаркăсем вĕрентсе хатĕрлекен кружок та хăйĕн ĕçне лайăх туса пырать. Унта 60 хĕрарăм вĕренет.

Станковăй пулемета вĕренмелли кружок хăйĕн малтанхи ĕçне пĕтерчĕ, унтан 22 призывник пулеметчик пулса тухрĕç. Халĕ çак кружокра тата 12 çын вĕренет.

Айзманăн çĕнĕ пьеси

Чăвашсен Государство Академи театрĕн чăваш труппи вăхăтлăха гастрольрен тавăрăннă. Халь вăл Чăваш АССР искусствăн тава тивĕçлĕ деятелĕ Айзман çырнă «Тăван çĕршывшăн» пьесăна лартса пама хатĕрленет. Пьесăра вăрçă пуçланнă кун пĕр колхозник çемьинче пулнă событисене кăтартса панă.

Кунсăр пуçне, артистсем Шупашкарти сборнăй пунктра концертсем парас енĕпе активлăн ĕçлеççĕ.

Пысăк концерт

Июлĕн 1-мĕшĕнче, Шупашкарти Крупская ячĕпе тăракан садра, оборонăй пысăк концерт пулчĕ, вăл концерта искусство работникĕсем пĕрлешсе организацинленĕ.

Концертра симфонически оркестр, юрăсемпе ташăсен ансамблĕ, Чăваш Академи театрĕпе ачасен театрĕн артисчĕсем пулчĕç.

Концерт программинче оборона çинчен сырнă сăвăсемпе юрăсем тата Хĕрлĕ Çар героизмне кăтартакан, çарпа оборона темисем тăрăх çырнă пьесăсен сыпăкĕсем пулчĕç.

Редакцирен

«Чăваш Коммуни» хаçатра кăçалхи мартăн 5-мĕшĕнче «Социализмлă харпăрлăха çирĕп упрамалла» ятлă статьи пичетленсе тухнăччĕ. Çав статьяра Çĕрпӳри примус горелкисем тăвакан заводăн снабжени начальникĕ пулса ĕçленĕ И. Сергеев юлташ çинчен сырнă вырăн тĕрĕс мар пулнă.

Ответлă редактор

В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТĔРМЕ ПЕК ÇĔРШЫВ

Нумаях пулмасть Германире темиçе уйăх пурăннă совет инженерĕсен группи Мускава тавăрăннă. Группа руководителĕ инженер Н. А. Ярхо «виççĕмĕш империри» йĕркесем çинчен хăй мĕн курнине ТАСС сотрудникне каласа панă.

— Хальхи вăхăтри Германири халăхăн пĕр правăсăр пурнăçне, фашистла пусмăрпа террора совет граждăнĕсемшĕн тавçăрса илме те йывăр,—тесе каласа парать Ярхо. — Çынран тĕлĕнмелле тискеррĕн мăшкăлласа кулнине курма пĕр хут çеç мар тӳрĕ килчĕ пире. Иртнĕ çулта эпир Зальцгитерти рудниксенче пултăмăр. Карьер патĕнче тĕссĕр тумтир тăхăннă çынсен массине куртăмăр. Йăлтах халран кайса çитнĕ çынсем чул йăтаççĕ. Вĕсен тумтирĕсем çине хĕрлĕ тата сарă пусма лентисем, тĕрлĕ номерсем çĕлесе хунă. Пăрăнса каймалли вырăнсенче пур çĕрте те ĕçлеме васкатакан, çанăçем çине свастика çĕлесе хунă çынсем тăраççĕ. Вĕсем кашни утăмрах рабочисем çине кăшкăраççĕ, хăвăртрах çӳреме хушаççĕ. Эпир хамăрăн куçпа мĕн курнисем умĕнче вырăс художникĕсем тунă, крепостной хресченсен пурнăçне кăтартса паракан картинăсем те тĕксĕмленеççĕ.

— Камсем кусем?—тесе ыйтрăмăр хамăра илсе çӳрекен нимĕç офицерĕсенчен.

—Политикăллă преступлени тунă çынсем,—терĕç вĕсем.

Çакăн пек преступниксене эпир Амбергри (Тӳри Силезире) металлурги заводĕнче те куртăмăр. Ĕçлекен арçынсемпе хĕрарăмсене хĕпăшаллă хурал сыхласа тăрать. Дюссельдорфри «Гюте-Гофнункс-Гюте» заводра ĕçлекен инженер Хюнскин та пире, çавăн пекех, вĕсем — преступниксем тесе ăнлантарса пачĕ. Каярахпа эпир пĕлсе илтĕмĕр: çавăн пек «преступниксем» кашни хуларах, кашни предприятире пекех пур. Вĕсем йĕплĕ пралукпа карса çавăрнă таса мар бараксенче пурăнаççĕ. Çак çынсем çине пăхса илмелле кăна, вара вĕсене мĕнле тăрантарса çуреме кăларса янă.

«Виççĕмĕш империре» поляксем, чехсен тата еврейсен пурнăçĕ татах та йывăртарах. Амберга кайнă чухне пирĕн пĕр чугунçул урлă çурăн каçмалла пулчĕ. Çул çинче пирĕн пата пĕр 45 çула çитнĕ арçын асăрханса пăхкаласа пычĕ. Кайран пĕлтĕмĕр, вăл шахтер-рудокоп пулнă.

— Эсир вырăссем-им? — ыйтрĕ вăл. Эпир камсем иккене пĕлнĕ хыççăн, çапла каларĕ:

— Эпĕ — поляк, — терĕ те хăйĕн костюмĕ çине çĕлесе хунă «Р» паллă çине тĕллесе кăтартрĕ («виççĕмĕш империре» поляксене пурне те çавăн пек клеме çактарса çӳретеççĕ).

Çак çын, ыйтусем парасса кĕтмесĕрех, хăй çинчен каласа пама тытăнчĕ. Гитлер Польшăна туртса илнĕ хыççăн, çак шахтерăн, ытти нумай поляксенни пекех, таçта Варшава çывăхĕнче арăмĕпе виçĕ ачи тăрса юлнă, хăйне ăна Пегнитц хулине рудниксенче ĕçлеме кăларса янă.

« Ĕç пур—кăштах тӳлеççĕ, ĕç çук—нимĕн те тӳлемеççĕ, анчах та киле ямаççĕ,—тесе каласа парать шахтер.— Килте çемье эпĕ куптан ярса паракан бонсемпе кăна çăкăр туянма пултарать. Ытти укçапа ăна нимĕн те сутмаççĕ.

Пирĕнтен уйăрăлнă чухне шахтер чĕтрекен сасăпа калать:

— Итлĕр-ха, эпĕ вырăс шкулĕнче вĕреннĕ, вырăссене юрататăп. Калăрха, хăçан пĕтĕ-ши çак асап? Пирĕнтен чурасем туса хучĕç, пире пусмăр айне персе чикрĕç, пире нимĕн калама та юрамасть...

Берлинра тата ытти хуласенче тĕл пулнă çамрăк чехсемпе те сахал мар кĕске калаçусем ирттерме тӳрĕ килчĕ пире. Восстанисенчен хăраса, гитлеровецсем çамрăксене, уйăрмах яшăсене Чехословакирен кăларса янă. Мĕн чухлĕ вĕреннине, мĕнле профессиллĕ çынсем пулнине пăхмасăрах, вĕсенчен фашистсем Берлинра урай, савăт-сапа çăвакансем, кельнерсем туса хунă... Пĕр çамрăк чех, хăйĕн специальноçĕпе токарь пулса ĕçлемеллескер, Таунценштрассери закусочнăй-автоматра савăт-сапа тасатать. Эпир Совет Союзĕнчен килнĕ çынсем иккенне пĕлсен, вăл пиртен çапла ыйтрĕ:

— Эсир хăçан пире тытăнран çăлăнса тухма пуляпăр?

Фашистсем чехсене мăшкăлламалли хушамат панă: «швейк» тесе чĕнеççĕ вĕсене.

Еврейсене çын вырăнне те хумаççĕ. Вĕсене парксене, скверсене кĕртмеççĕ. Скверсем çумĕнче ятарласах сарă краскăпа сăрланă, «И» (Иудей) тесе сырса хунă скамейкăсем пур, еврейсене çавсем çине кăна ларма ирĕк параççĕ. Пур магазинсем çинче те çак-нашкал вывескăсем: «еврейсене магазина каçхине 5 сехет хыççăн кĕме юрать». Урăхла каласан, магазин полкисем йăлтах пушанса юлсан кăна унта еврейсене кĕртеççĕ.

Еврей-врачсем еврейсене кăна чиртен сыватма пултараççĕ. Пĕр-пĕр нимĕç чиртен еврей-медик патĕнче сывалма хăять пулсан, унăн вара ырăне кĕтмелли çук! Еврейсен нимĕçсем çӳрекен обществăллă вырăнсене кĕме право пук. Вĕсем нимĕç убернăйне те кĕме пултараймаççĕ. Бомбоубежищесене еврейсене кĕртмеççĕ. Фашистсем еврейсенчен мăшкăлласа çапла тума хушаççĕ: еврей-врачсен вывескăсем çине хăйсен хушамачĕсĕр пуçне тата «Израиль» тесе çырса хумалла, врач хĕрарăм пулсан—«Сарра» тесе çырса хумалла.

Германире пĕр-ик уйăх пурăннă хыççăн çакна курса илетĕн: вăл — халăхсен тĕрми, концентрацилле лагерьсен, выçлăхпа правасăрлăхăн çĕршывĕ. Сывлама та тăвăр унта çынна!

Анчах фашистла террор кирек мĕнле хаяр пулсан та, Германири ĕççыннисем хăйсем Совет Союзне пĕтĕм чĕререн юратни çинчен каламасăр чăтса тăраймаççĕ. Эпир кирек ăçта пырсан та, пире рабочисем, интеллигентсем хупăрласа илетчĕç, пайтах ыйтусем паратчĕç, хăйсем Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă пулни çинчен калатчĕç.

(ТАСС).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» тата «Хатĕр пул» журналсен — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 3136. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ Ь 345. ф. б. 58 84 п. л.